ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул
Март
7
эрнекун
№ 48 (8700)
Хакĕ 20 пус.
35-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

СССР Верховнăй Совечĕн ларăвĕсем. Союз Совечĕн 1952 çулхи мартăн 5-мĕшĕнче пулнă ларăвĕ çинчен. Информациллĕ пĕлтерӳ; Национальноçсен Совечĕн 1952 çулхи мартăн 5-мĕшĕнче пулнă ларăвĕ çинчен. Информациллĕ пĕлтерӳ; Союз Совечĕн Мандат комиссийĕн председателĕ А. М. Пузанов депутат тунă доклад; Национальноçсен Совечĕн Мандат Комиссийĕн председателĕ И. Г. Кэбин депутат тунă доклад (1 стр.).

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем поляксен тыткăна лекнĕ офицерĕсене Катынь вăрманĕнче персе вĕлернипе тĕпчесе пĕлме Ятарласа тунă Комисси пĕлтерни (2—3 стр.).

Греци демократĕсем И. В. Сталин юлташ патне янă çыру (4 стр.).

Грецин суд вĕлермелле тунă патриочĕсен тăванĕсемпе политикăллă ĕçсемшĕн тĕрмере ларакансем И. В. Сталин юлташ патне янă çырусем (4 стр.).

Болгари халăхĕ вырăс халăхне тулли кăмăлтан тав тăвать (4 стр.).

Вильгельм Пик Германи хĕрарăмĕсем патне янă çыру (4 стр.).

Республикăри ĕçсыннисем мартăн 8-мĕшне уявлама хатĕрленеççĕ (4 стр.).

Вăрман хатĕрлемелли плана кашни вăрманпромхоз, кашни район тăрăх тултарар!

Республикăри вăрман промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисем, инженерсемпе техниксем, служащисем тата колхозниксемпе колхозницăсем, Сталин юлташ патне янă çырура, кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра йывăç касса хатĕрлемелли плана мартăн 15-мĕшĕ тĕлне тултарма, сезон вĕçлениччен Тăван çĕршыва планран ирттерсе 100 пин кубометр йывăç хатĕрлесе пама социализмлă обязательство йышăнчĕç. Чылай районсемпе колхозсем сезон планне тата хăвăртрах тултарма сăмах пачĕç.

Аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр умĕнче йышăннă обязательствăна чыслă пурнăçлассишĕн вăрманпромхозсемпе районсенче социализмлă ăмăрту анлă сарăлчĕ. Халĕ республикăра вăрман хатĕрлемелли плана тултарса çитермелли стахановла уйăхлăх пырать.

Большевиксен партийĕпе Совет правительстви вăрман хатĕрлекенсен ĕçне çăмăллатма тата вĕсен ĕç тухăçлăхне ӳстерме мĕн кирлине пурне те туса параççĕ. Республикăри вăрман промышленноçĕнче çĕнĕ, хăватлă механизмсем нумай. Кăçал «Чăвашвăрман» трест КТ-12 тракторсем, кусса çӳрекен электростанцисем, крансем нумай туяннă. Çав çĕнĕ, пуян техникăпа тулли усă курни йывăç хатĕрлес ĕçе кунтан-кун вăйлатма, государство заданине чыслă пурнăçласа пыма май парать.

Юлашки çулсенче вăрман промышленноçĕнче çĕнĕ техникăна лайăх вĕренсе çитнĕ, оборудование тухăçлă ĕçлеттерме пултаракан кадрсем ӳссе çитĕнчĕç. Нумаях пулмасть Чăвашоблпрофсовет президиумĕпе вăрман промышленноçĕнчи работниксен профсоюзĕн обкомĕ Алтышево вăрманпромхозĕнчи паллă тракторист Н. Вильдяев, Вăрнар вăрманпромхозĕнчи стахановец-шофер П. Егоров тата Улатăр вăрманпромхозĕнчи поток тăрăх ĕçлекен комплекслă бригадăн бригадирĕ Ф. Тырышкин юлташсен докладне итлерĕç. Тăван çĕршыв шанса панă пуян техникăна лайăх пăхса усраса тата тухăçлă ĕçлеттерсе, асăннă юлташсем сезонти заданине чылай ирттерсе тултарнă, стахановла юхăма анлă сарма, технологи процесне çĕнетсе лайăхлатма пулăшакан паха майсем тупнă.

СССР Вăрман промышленность министерствипе вăрман промышленноçĕнчи работниксен профсоюзĕн Центральнăй комитечĕ Кире вăрманпромхозĕнче ĕçлекен паллă стахановеца, Чăваш АССР Верховнăй Совет депутатне М. Сысуйкин юлташа тата Алтышево вăрманпромхозĕнчи Н. Вильдяев юлташа «Чи лайăх тракторист-трелевщик» ятне пама йышăннă. Пĕлрес вăрманпромхозĕнче пур шоферсем те ĕç нормине ăнăçлă тултарса пыраççĕ. Çавăн пек паха тĕслĕхсем республикăра сахал мар. Новаторсен опычĕ çакна кăтартать: кашни вăрманпромхозрах ĕç тухăçлăхне ӳстермелли пысăк резервсем пур.

Трест январьпе февраль уйăхĕсенче кварталти плана йывăç касса хатĕрлес енĕпе 46 процент, турттарса кăларас енĕпе çуррине çеç тултарнă. Икĕ уйăх хушшинче трест Тăван çĕршыва иксĕр пин кубометр яхăн йывăç парса çитереймен. Çак факт республикăри пĕтĕм партипе совет общественноçне хумхантарма тивĕçлĕ.

Вăрман хатĕрлес ĕç юлса пыни предприятисемпе трест руководителĕсем механизмсемпе тулли усă курма, малта пыракансен опытне пĕтĕçтерсе сарма, ĕçе тĕрĕс организацилеме, рабочисемпе колхозниксем валли ĕçлеме тата пурăнма лайăх условисем туса пама тăрăшманнинчен килет. Вăрманпромхозсенче куллен чылай автомашинăсем, тракторсем, электропăчкăсем ахаль лараççĕ, механизмсене талăкĕпех ĕçлеттермеççĕ, чылай рабочисем ĕç нормине тултараймаççĕ.

Нумай вăрманпромхозсемпе «Чăвашвăрман» трест руководителĕсем государство заданине чыслă пурнăçлассишĕн тивĕçлĕ ответлăх туймаççĕ, шалти резервсене палăртмаççĕ, малта пыракансен опытне пĕтĕçтермеççĕ, ĕçе тĕрĕс организацилеме, социализмлă ăмăртăва сарма тăрăшмаççĕ, тĕл пулакан çитменлĕхсемпе йывăрлăхсене сиенчĕх пĕтерессишĕн кирлĕ пек кĕрешмеççĕ.

Йывăç хатĕрлес ĕç юлса пыни тепĕр сăлтавĕ вăл—хăшпĕр районсенчи партипе совет органĕсем вăрманпромхозсене кирлĕ пек пулăшманни, государство заданине тултарма ĕç вăйĕпе турттăм вăйĕ çителĕклĕ уйăрса паманни пулать. Сезон пуçланнăранпа пилĕк уйăх иртрĕ. Апла пулин те Вăрмар, Шупашкар тата Чурачăк районĕсем йывăç турттарса кăлармалли плана, Елчĕк районĕ—йывăç касса хатĕрлемелли плана çуррине те тултарман.

ВКП(б) обкомĕн VIII пленумĕ Ишлейпе Красноармейски районĕсем вăрман хатĕрлемелли плана çултан-çул тултарманнине, партипе советсен вырăнти органĕсем государствăн ответлă заданине пурнăçлама кирлĕ мерăсем йышăнманнине палăртрĕ. Асăннă районсенчи райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем пленум решенийĕнчен тивĕçлĕ вывод туман. Вĕсем ку сезонта та юлса пыраççĕ. Ишлей районĕ йывăç турттарса кăлармалли плана 34 процент çеç тултарнă. Красноармейски районĕн тата 12 пин кубометр йывăç турттарса кăлармалла. Февралĕн 25-мĕшĕпе мартăн 1-мĕшĕ хушшинче 450 кубометр çеç турттарса кăларнă.

Нумай районсенче партипе совет организацийĕсем колхозниксемпе колхозницăсене стахановла уйăхлăха активлă хутшăнтарма, панă сăмаха чыслă пурнăçлама мобилизацилемеççĕ.

Вăрман хатĕрлевĕ—государствăлла пысăк та ответлă ĕç. Тăван çĕршыва йывăç ытлăн-çитлĕн парса тăрассишĕн партипе совет организацийĕсем куллен большевикла кĕрешни кирлĕ. Муркаш, Çĕмĕрле тата Пăрачкав районĕсен опычĕ çакна уççăн кăтартса парать: вырăнти организацисем ĕçе тĕрĕс, пĕлсе йĕркелесен, колхозниксем хушшинче масăллă-политикăллă ĕçе анлă сарса пырсан, государство заданине вăхăтра тата ирттерсе тултарма пулать.

Эпир вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе ответлă тапхăра кĕтĕмĕр. Март кĕркуннепе хĕллехи сезон планне тултарассине татса паракан уйăх. Вăрманпромхоз руководителĕсемпе районсенчи партипе совет организацийĕсен хĕллехи кашни кунпа лайăх усă курма тăрăшас пулать. Механизмсемпе машинăсене япăх ĕçлеттернине, колхозсем вăрман хатĕрлеме ĕç вăйĕпе турттăм вăйĕ çителĕксĕр уйăрса яннине тек чăтса тăма май çук. Кашни вăрманпромхозăн, плана тултарман районсен йывăç хатĕрлес ĕçе халиччехинчен ик-виç хут хăвăртлатас пулать. Çапла тусан çеç республика хăйĕн Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçне чыслă пурнăçлĕ.

Улатăр, Пĕлрес, Первомайски, Шăмăршă, Çĕмĕрле, Вăрнар, Хĕрлĕ Чутай тата Канаш райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем вăрманпромхозсен ĕçĕпе тĕплĕнрех интересленме, рабочисемпе колхозниксем хушшинчи социализмлă ăмăртăва куллен ертсе пыма, масăллă-политикăллă ĕçе вăйлатма тивĕçлĕ. Парти райкомĕсен вăрман хатĕрлевĕнче коммунистсен авангардлă рольне ӳстерсе пымалла, рабочисен пуçарулăхĕпе пултарулăхне вăйлатмалла. Тракторсем, крансем, лебедкăсем икшер смена ĕçлеччĕр. Кашни вăрманпромхозра пур ĕçе те поток тăрăх туса пымалла.

Малта пыракан вăрманпромхозсенче сехетри график тăрăх ĕçлеççĕ. Çав паха опыта ытти вăрманпромхозсене те сарни кирлĕ. Вăрманпромхоз руководителĕсен уйрăмах ĕç тухăçлăхне ӳстерессi, кашни рабочие, колхозника панă сăмаха чыслă пурнăçлама лайăх майсем туса парасси çине тимлĕ пăхас пулать.

Вăрманпромхозсенчи партипе профсоюз тата хуçалăх организацийĕсен задачи вăл—рабочисемпе колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва куллен вăйлатса пырасси, малта пыракансен опытне анлă сарасси пулать.

Панă сăмаха чыслă пурнăçласси—совет çыннисен йăлине кĕнĕ. Аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр Сталин юлташ умĕнче йышăннă обязательствăна тултарма пирĕн пур майсем те çителĕклĕ, ĕçе большевикла организацилени çеç кирлĕ.

Социализмлă халăх хуçалăхне малалла аталантарма, ĕçсыннисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатма тата культурине ӳстерме çĕршыва йывăç материалсем нумай кирлĕ. Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçе чыслă пурнăçлассишĕн, халăх хуçалăхне йывăç ытлăн-çитлĕн парса тăрассишĕн вăрманпромхозсем, районсемпе колхозсем, рабочисемпе колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлă сарар!

Хĕрлĕ ялав панă

Çак кунсенче Приволжски вăрманпромхозĕнчи рабочисемпе служащисен, инженерсемпе техниксен пĕрлехи пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта вăрманпромхоза, 1951 çулхи IV-мĕш кварталта тунă çитĕнӳсемшĕн, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн кусса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пачĕç.

Пухура вăрманпромхозри стахановецсем: В. Юркин вăрман касакан, Н. Жолобов, В. Соков шоферсем тата ытти юлташсем те тухса каларĕç. Вĕсем куллехи ĕç нормине 150—170-шер процент тултарса пыма, вăрман касакансем Сталин юлташ патне янă çырура илнĕ обязательствăсене тултарассишĕн ырми-канми ĕçлеме пулчĕç.

СССР Верховнăй Совечĕн ларăвĕсем

Союз Совечĕн 1952 çулхи мартăн 5-мĕшĕнче пулнă ларăвĕ çинчен ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРӲ

Мартăн 5-мĕшĕнче, кăнтăрла 2 сехетре, Кремльте, Кремльти Пысăк Двореçра Союз Совечĕн виççĕмĕш сессийĕ уçăлнă.

Лару председателĕ—Союз Совечĕн председателĕ **М. А. Яснов** депутат Мандат комисси председательне **А. М. Пузанов** депутата тăхăр суйлав округĕнче Союз Советĕнчен тухса ӳкнĕ депутатсем вырăнне Союз Советне çĕнĕрен суйланă депутатсен полномочийĕсене тĕрĕслении результачĕсем çинчен доклад тума сăмах парать.

И. П. Петров депутат сĕннĕ тăрăх, Союз Совечĕ çакăн пек постановлени йышăнать:

«Мандат комиссийĕн докладне итленĕ хыççăн, Союз Совечĕ çапла йышăнать:

Мандат комиссийĕн докладне — Союз Советне 430-мĕш Мелитополь суйлав округĕнче 1951 çулхи майăн 27-мĕшĕнче, 1-мĕш Ленински суйлав округĕнче тата 203-мĕш Сызрань суйлав округĕнче 1951 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче, 251-мĕш Сердобски суйлав округĕнче 1951 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнче, 274-мĕш Балашов суйлав округĕнче, 327-мĕш Магнитогорск суйлав округĕнче 1951 çулхи октябрĕн 28-мĕшĕнче, 447-мĕш Таращă суйлав округĕнче 1951 çулхи декабрĕн 23-мĕшĕнче, 587-мĕш Караганда ял суйлав округĕнче 1952 çулхи январĕн 27-мĕшĕнче тата 26-мĕш Егорьевск суйлав округĕнче 1952 çулхи февралĕн 24-мĕшĕнче суйланă депутатсен полномочийĕсем тĕрĕс тесе йышăннă доклада çирĕплетес».

Союз Совечĕн председателĕ **М. А. Яснов** депутат сессире пăхса тухма çакăн пек ыйтусем тăратни çинчен пĕлтерет:

1. ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджетне тата ССР Союзĕн 1950 çулхи бюджечĕ мĕнле пурнăçланни çинчен тунă отчета çирĕплетесси.

Ку ыйтăва СССР Министрĕсен Совечĕ сĕнет.

2. СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕсене çирĕплетесси.

Ку ыйтăва СССР Верховнăй Совет Президиумĕ сĕнет.

А. Б. Аристов депутат сĕннипе Союз Совечĕ, пĕр саслă пулса, çав ыйтусене сесси кун йĕркине кĕртет.

А. Н. Егоров депутат сĕннипе Союз Совечĕ сессири ыйтусене пăхса тухма çакăн пек йĕрке йышăнать: ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджечĕ çинчен тата ССР Союзĕн 1950 çулхи бюджечĕ мĕнле пурнăçланнин отчечĕ çинчен тăвакан доклада Национальноçсен Совечĕн тата Союз Совечĕн пĕрлехи ларăвĕнче итлемелле, бюджет комиссийĕсен содокладчĕсене, бюджета сӳтсе явса çирĕплетессине кашни палатăра уйрăммăн пăхса тухмалла; СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕсене çирĕплетес ыйтăва кашни палатăра уйрăммăн пăхса тухмалла.

Çакăнпа Союз Совечĕн пĕрремĕш ларăвĕ хупăнать.

Национальноçсен Совечĕн 1952 çулхи мартăн 5-мĕшĕнче пулнă ларăвĕ çинчен ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРӲ

Мартăн 5-мĕшĕнче, кăнтăрла 4 сехетре, Кремльте, Кремльти Пысăк Двореçра Национальноçсен Совечĕн сессийĕ уçăлнă.

Лару председателĕ Национальноçсен Совечĕн председателĕ **Ж. Шаяхметов** депутат Мандат комисси председательне **И. Г. Кэбин** депутата тăхăр суйлав округĕнче Национальноçсен Советĕнчен тухса ӳкнĕ депутатсем вырăнне Национальноçсен Советне çĕнĕрен суйланă депутатсен полномочийĕсене тĕрĕслении результачĕсем çинчен доклад тума сăмах парать.

И. С. Грушецкий депутат сĕннĕ тăрăх, Национальноçсен Совечĕ çакăн пек постановлени йышăнать:

«Мандат комиссийĕн докладне итленĕ хыççăн, Национальноçсен Совечĕ çапла йышăнать:

Мандат комиссийĕн докладне—Национальноçсен Советне Грузи ССР-ĕнчи 126-мĕш Сухуми хули суйлав округĕнче 1951 çулхи майăн 27-мĕшĕнче, Кăнтăр Осети автономиллĕ облаçĕнчи 619-мĕш Знаурски суйлав округĕнче 1951 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче, РСФСР 15-мĕш Горький суйлав округĕнче 1951 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче, Мордва АССР-ĕнчи 508-мĕш Красная слобода суйлав округĕнче 1951 çулхи июлĕн 29-мĕшĕнче, РСФСР 12-мĕш Краснодар суйлав округĕнче, Дагестан АССР-чи 450-мĕш Хунзахски суйлав округĕнче тата Нагорно-Карабах автономиллĕ облаçĕнчи 601-мĕш Гадрут суйлав округĕнче 1951 çулхи сентябрĕн 30-мĕшĕнче, Литва ССР-ĕнчи 183-мĕш Паневежски ял суйлав округĕнче 1951 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнче тата Тутар АССР-ĕнчи 543-мĕш Çĕнĕ Шешмин суйлав округĕнче 1951 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнче суйланă депутатсен полномочийĕсем тĕрĕс тесе йышăннă доклада çирĕплетес».

Национальноçсен Совечĕн председателĕ **Ж. Шаяхметов** депутат сессире пăхса тухма çакăн пек ыйтусем тăратни çинчен пĕлтерет:

1. ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджетне тата ССР Союзĕн 1950 çулхи бюджечĕ мĕнле пурнăçланни çинчен тунă отчета çирĕплетесси.

Ку ыйтăва СССР Министрĕсен Совечĕ сĕнет.

2. СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕсене çирĕплетесси.

Ку ыйтăва СССР Верховнăй Совет Президиумĕ сĕнет.

Н. У. Базанова депутат сĕннипе Национальноçсен Совечĕ пĕр саслă пулса, çак ыйтусене сесси кун йĕркине кĕртет.

И. П. Куджиашвили депутат сĕннипе Национальноçсен Совечĕ сессири ыйтусене пăхса тухма çакăн пек йĕрке йышăнать: ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджечĕ çинчен тата ССР Союзĕн 1950 çулхи бюджечĕ мĕнле пурнăçланнин отчечĕ çинчен тăвакан доклада Союз Совечĕпе Национальноçсен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕнче итлемелле, бюджет комиссийĕн содоклачĕсене, бюджета сӳтсе явса çирĕплетессине кашни палатăра уйрăммăн пăхса тухмалла;

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕсене çирĕплетес ыйтăва кашни палатăра уйрăммăн пăхса тухмалла.

Çакăнпа Национальноçсен Совечĕн пĕрремĕш ларăвĕ хупăнать.

Союз Совечĕн Мандат комиссийĕн председателĕ А. М. Пузанов депутат тунă доклад

Депутат юлташсем! СССР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш сессийĕ пулнăранпа иртнĕ вăхăтра Союз Совечĕн составĕнчен тухса ӳкнĕ депутатсем вырăнне, СССР Конституцийĕпе тата СССР Верховнăй Советне суйламалли Положенин 108-мĕш статьипе килĕштерсе, тăхăр суйлав округĕнче Союз Советне депутатсем суйланă.

1951 çулхи майăн 27-мĕшĕнче Запорожье облаçĕнчи 430-мĕш Мелитополь суйлав округĕнче, 1951 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче — Мускав хулинчи 1-мĕш Ленински суйлав округĕнче тата Куйбышев облаçĕнчи 203-мĕш Сызрань суйлав округĕнче, 1951 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнче—Пенза облаçĕнчи 251-мĕш Сердобски суйлав округĕнче, 1951 çулхи октябрĕн 23-мĕшĕнче—Саратов облаçĕнчи 274-мĕш Балашов суйлав округĕнче тата Челябинск облаçĕнчи 327-мĕш Магнитогорск суйлав округĕнче, 1951 çулхи декабрĕн 23-мĕшĕнче—Киев облаçĕнчи 447-мĕш Таращански суйлав округĕнче, 1952 çулхи январĕн 27-мĕшĕнче—Казах ССР-ĕнчи 587-мĕш Караганда ял суйлав округĕнче, 1952 çулхи февралĕн 24-мĕшĕнче—Мускав облаçĕнчи 26-мĕш Егорьевск суйлав округĕнче суйлавсем иртнерĕ.

Союз Советне депутатсем суйланă чухне суйлав округĕсен чиккисем ĕлĕкхи пекех, СССР Верховнăй Совечĕн 1950 çулхи март уйăхĕнчи суйлав вăхăтĕнчи пекех пулнă.

Союз Советне суйламалли кашни округрах обществăллă организацисен представителĕсенчен суйлав комиссийĕсем тунă. Вĕсем, СССР Верховнăй Советне суйламалли Положенин 46-мĕш статьи тăрăх, суйлав ĕçĕсене ертсе пынă.

Мĕнпур тăхăр суйлав округĕ тăрăх суйлавсене 1.388.755 суйлавçă хутшăннă, çакă вăл асăннă округсенчи мĕнпур суйлавçăсен 99,99 проценчĕ пулать. Коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн 1.387.873 суйлавçă сасăланă, çакă вăл сасăланă мĕнпур суйлавçăсен 99,94 проценчĕ пулать.

Союз Совечĕн пĕрремĕш сессийĕнче суйланă Мандат комиссийĕ, СССР Конституцийĕн 50-мĕш статьи хушнă тăрăх, суйлав докуменчĕсене тата кашни депутат пирки ярса панă суйлав докуменчĕсемпе материалĕсене тăхăр суйлав округĕ тăрăх та тĕрĕслесе тухрĕ, округри суйлав комиссийĕсем депутата суйлама тăратнă кандидатсене регистрацилени çинчен тата сасăлани результачĕсем çинчен çырса панă протоколсене пăхса тухрĕ.

Кашни депутата суйлани çинчен калакан документсемпе материалсене тĕрĕсленĕ хыççăн, Мандат комиссийĕ депутатсене пур тăхăр суйлав округĕ тăрăх та СССР Конституцийĕпе СССР Верховнăй Советне суйламалли Положени тăрăх суйланине палăртрĕ.

Мандат комиссийĕ çакăн пек решени йышăнчĕ, ăна Союз Советĕнче пăхса тухма сĕнет:

«Союз Советне суйламалли тăхăр суйлав округĕнчи—Запорожье облаçĕнчи 430-мĕш Мелитополь суйлав округĕнчи, Мускав хулинчи 1-мĕш Ленински суйлав округĕнчи, Куйбышев облаçĕнчи 203-мĕш Сызрань суйлав округĕнчи, Пенза облаçĕнчи 251-мĕш Сердобски суйлав округĕнчи, Саратов облаçĕнчи 274-мĕш Балашов суйлав округĕнчи, Челябинск облаçĕнчи 327-мĕш Магнитогорск суйлав округĕнчи, Киев облаçĕнчи 447-мĕш Таращански суйлав округĕнчи, Казах ССР-ĕнчи 587-мĕш Караганда ял суйлав округĕнчи тата Мускав облаçĕнчи 26-мĕш Егорьевск суйлав округĕнчи суйлав комиссийĕсем кашни депутат пирки ярса панă мĕнпур суйлав докуменчĕсемпе материалсене тĕрĕслесе тухнă хыççăн мандат комиссийĕ çакна палăртать:

1. Союз Советне депутатсене пур тăхăр суйлав округĕ тăрăх та СССР Конституцийĕпе СССР Верховнăй Советне суйламалли Положени тăрăх суйланă.

2. Нихăш суйлав округĕнчи суйлава та пăрахăçлама сăлтав çук, Союз Советне депутатсем суйламалли нихăш суйлав округĕнчен те СССР Конституцине тата СССР Верховнăй Советне суйламалли Положение пăсни çинчен çырса янă жалоба та, заявлени те çук.

Çӳлте асăннисене шута илсе, Союз Совечĕн Мандат комиссийĕ Союз Советне суйланă депутатсен: 430-мĕш Мелитополь суйлав округĕнче суйланă Савелий Федорович **Половновăн**, 1-мĕш Ленински суйлав округĕнче суйланă Александр Николаевич **Бакулевăн**, 203-мĕш Сызрань суйлав округĕнче суйланă Леонид Николаевич **Ефремовăн**, 251-мĕш Сердобски суйлав округĕнче суйланă Павел Семенович **Дубинкинăн**, 274-мĕш Балашов суйлав округĕнче суйланă Григорий Васильевич **Орловăн**, 327-мĕш Магнитогорск суйлав округĕнче суйланă Александр Филиппович **Борисовăн**, 447-мĕш Таращански суйлав округĕнче суйланă Иван Иосифович **Стафийчукăн**, 587-мĕш Караганда ял суйлав округĕнче суйланă Сергей Яковлевич **Яковлевăн** тата 26-мĕш Егорьевск суйлав округĕнче суйланă Иван Васильевич **Капитоновăн** полномочийĕсене тĕрĕс тесе йышăнать».

Национальноçсен Совечĕн Мандат комиссийĕн председателĕ И. Г. Кэбин депутат тунă доклад

Депутат юлташсем! СССР Конституцийĕпе тата СССР Верховнăй Советне суйламалли Положенин 108-мĕш статьипе килĕштерсе, СССР Верховнăй Совечĕн II-мĕшпе III-мĕш сессийĕсем хушшинче Национальноçсен Советне унтан тухса ӳкнĕ депутатсем вырăнне тăхăр суйлав округĕнче депутатсем суйланă:

1951 çулхи майăн 27-мĕшĕнче Грузин ССР-ĕнчи 126-мĕш Сухуми суйлав округĕнче суйлав иртнерĕ.

1951 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче Кăнтăр Осетин автономиллĕ облаçĕнчи 619-мĕш Знаурски суйлав округĕнче суйлав иртнерĕ.

1951 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче РСФСР-ти 15-мĕш Горький суйлав округĕнче суйлав иртнерĕ.

1951 çулхи июлĕн 29-мĕшĕнче Мордва АССР-ĕнчи 508-мĕш Краснослободски суйлав округĕнче суйлав иртнерĕ.

1951 çулхи сентябрĕн 30-мĕшĕнче РСФСР-ти 12-мĕш Краснодар суйлав округĕнче, Дагестан АССР-ĕнчи 450-мĕш Хунзахски суйлав округĕнче тата Нагорно-Карабах автономиллĕ облаçĕнчи 601-мĕш Гадрутски суйлав округĕнче суйлавсем иртнерĕ.

1951 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнче Литва ССР-ĕнчи 183-мĕш Паневежски ял суйлав округĕнче тата Тутар АССР-ĕнчи 543-мĕш Çĕнĕ Шешмин суйлав округĕнче суйлавсем иртнерĕ.

Çӳлте кăтартнă суйлав округĕсенче Национальноçсен Советне депутатсем суйланă чухне суйлав округĕн чиккисем ĕлĕкхи пекех, СССР Верховнăй Совечĕн 1950 çулхи март уйăхĕнчи суйлавĕ вăхăтĕнчи пекех пулнă.

Национальноçсен Советне суйламалли кашни округрах суйлав комиссийĕсем тунă. Вĕсем, СССР Верховнăй Советне суйламалли Положенин 50-мĕш статьи тăрăх, суйлав ĕçĕсене ертсе пынă.

Суйлавсене 5.525.534 суйлавçă хутшăннă, çакă вăл ку округсенчи мĕнпур суйлавçăсен 99,99 проценчĕ пулать. Коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн 5.517.369 суйлавçă сасăланă, çакă вăл сасăлама хутшăннă мĕнпур суйлавçăсен 99,85 проценчĕ пулать.

Национальноçсен Совечĕн Мандат комиссийĕ, СССР Конституцийĕн 50-мĕш статьи хушнă тăрăх, тăхăр суйлав округĕнче депутата суйлама тăратнă кандидатсене регистрацилени çинчен округри суйлав комиссийĕсем çырса панă протоколсене тата сасăлани çинчен округри суйлав комиссийĕсем çырса панă протоколсене, çавнашкалах кандидатсем тивĕçлĕ суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшнине те тĕрĕслесе тухрĕ. СССР Верховнăй Советне суйламалли Положение пăсни çинчен СССР Верховнăй Совечĕн Президиумне жалобăсемпе заявленисем пани пулман.

Документсене тĕрĕслесе тухнă хыççăн Мандат комиссийĕ çакна палăртрĕ: суйлавсене пур тăхăр суйлав округĕ тăрăх та СССР Конституцийĕпе СССР Верховнăй Советне суйламалли Положени тăрăх ирттернĕ, нихăш суйлав округĕнчи суйлава та пăрахăçлама сăлтав çук.

Çакна шута илсе, Мандат комиссийĕ çакăн пек решени йышăнчĕ, ăна Национальноçсен Советне çирĕплетме тăратать:

«Национальноçсен Советне суйламалли тăхăр суйлав округĕнчи—Грузин ССР-ĕнчи 126-мĕш Сухуми суйлав округĕнчи, Кăнтăр-Осетин автономиллĕ облаçĕнчи 619-мĕш Знаурски суйлав округĕнчи, РСФСР-ти 15-мĕш Горький суйлав округĕнчи, Мордва АССР-ĕнчи 508-мĕш Краснослободски суйлав округĕнчи, РСФСР-ти 12-мĕш Краснодар суйлав округĕнчи, Дагестан АССР-ĕнчи 450-мĕш Хунзахски суйлав округĕнчи, Нагорно-Карабах автономиллĕ облаçĕнчи 601-мĕш Гадрутски суйлав округĕнчи, Литва ССР-ĕнчи 183-мĕш Паневежски ял суйлав округĕнчи тата Тутар АССР-ĕнчи 543-мĕш Çĕнĕ Шешмин суйлав округĕнчи суйлав комиссийĕсем кашни депутат пирки ярса панă мĕнпур суйлав докуменчĕсене тĕрĕслесе тухнă хыççăн Мандат комиссийĕ çакна палăртать:

1. Национальноçсен Советне депутатсене çӳлте кăтартнă тăхăр суйлав округĕнче кашнинчех СССР Конституцийĕпе СССР Верховнăй Советне суйламалли Положени тăрăх суйланă.

2. Нихăш суйлав округĕнчи суйлава та пăрахăçлама сăлтав çук, çавнашкалах Национальноçсен Советне суйламалли нихăш суйлав округĕнчен те СССР Конституцине тата СССР Верховнăй Советне суйламалли Положение пăсни çинчен çырса панă нимĕнле жалоба та, заявлени те çук.

Çӳлте асăннисене шута илсе, Национальноçсен Совечĕн Мандат комиссийĕ Национальноçсен Советне суйланă депутатсен—126-мĕш Сухуми суйлав округĕнче суйланă Митрофан Понович **Кучавăн**, 619-мĕш Знаурски суйлав округĕнче суйланă Виктор Димитриевич **Купрадзен**, 15-мĕш Горький суйлав округĕнче суйланă Николай Николаевич **Блохинăн**, 508-мĕш Краснослободски суйлав округĕнче суйланă Мария Яковлевна **Самсонкинăн**, 12-мĕш Краснодар суйлав округĕнче суйланă Виктор Максимович **Сусловăн**, 450-мĕш Хунзахски суйлав округĕнче суйланă Магомед Меджидович **Меджидовăн**, 601-мĕш Гадрутски суйлав округĕнче суйланă Джавад Григорьевич **Аванесянăн**, 183-мĕш Паневежски ял суйлав округĕнче суйланă Она Петровна **Балтушникенен** тата 543-мĕш Çĕнĕ Шешмин суйлав округĕнче суйланă Миргарифан Замалеевич **Азизовăн** полномочийĕсене тĕрĕс тесе йышăнать».

Нимӗҫсен фашистла захватчикӗсем поляксен тыткӑна лекнӗ офицерӗсене Катынь вӑрманӗнче персе вӗлернине тӗпчесе пӗлме Ятарласа тунӑ Комисси

ПӖЛТЕРНИ

(Малалли. Пуҫламӑшӗ «Чӑваш Коммуни» хаҫатӑн 47-мӗш номерӗнче).

Нимӗҫсем «свидетельсем» шыраса тупас тесе малашне «Козьи Горы» тенӗ вырӑнтан икӗ километр ҫурӑра вырнаҫнӑ Гнездово чугун ҫул станцийӗнчи работниксемпе интересленме пуҫланӑ.

Тыткӑна лекнӗ поляксем ҫав станцие 1940 ҫулхи ҫуркунне пынӑ, нимӗҫсем железнодорожниксенчен тивӗҫлӗ показанисем илесшӗн пулнӑ курӑнать. Ҫав тӗллевпе нимӗҫсем 1943 ҫулхи ҫуркунне Гнездово станцийӗн начальникӗ пулнӑ С. В. Иванова, станцинчи дежурнӑй И. В. Савватеева тата ыттисене те гестапӑна илсе кайнӑ.

С. В. Иванов, 1882 ҫулта ҫуралнӑ, хӑйне гестапӑна чӗнсе илни ҫинчен ҫапла калать:

«...Ку вӑл 1943 ҫулхи мартра пулса иртрӗ. Мана нимӗҫ офицерӗ тӑлмачпа пӗрле допрос турӗ. Эпӗ кам пулни ҫинчен тата нимӗҫсем района оккупацилечченхи Гнездово станцийӗнче мӗнле ӗҫре ӗҫлени ҫинчен тӑлмач урлӑ ыйтса пӗлнӗ хыҫҫӑн, офицер манран ҫапла ыйтрӗ: 1940 ҫулхи ҫуркунне Гнездово станцине темиҫе поездпа, пысӑк ушкӑнсемпе, Польшӑн тыткӑна лекнӗ ҫар офицерӗсем килнине пӗлетӗн-и, терӗ.

Эпӗ ун ҫинчен пӗлетӗп тесе каларӑм.

Унтан офицер манран ҫапла ыйтрӗ: большевиксем ҫав 1940 ҫулхи ҫуркуннех, Польша офицерӗсем килсе ҫитсен часах, вӗсене пурне те Катынь вӑрманӗнче персе вӗлернине пӗлетӗн-и терӗ.

Эпӗ ҫапла ответлерӗм: ун ҫинчен эпӗ нимӗн те илтмен тата вӑл пулма та пултараймасть, 1940 ҫулхи ҫуркунне Гнездово станцине пынӑ тыткӑнри Польша офицерӗсене эпӗ 1940—1941 ҫулсенче, нимӗҫсем Смоленска тытса иличчене, ҫул-йӗр тунӑ ӗҫре курнӑ, терӗм.

Ун хыҫҫӑн офицер мана ҫапла каласа хучӗ: Германи офицерӗ поляксене большевиксем персе вӗлернӗ тесе ҫирӗплетет пулсан, вӑл чӑннипех ҫапла пулнине пӗлтерет. «Ҫавӑнпа та», терӗ малалла офицер, «сирӗн нимӗн хӑрамалли те ҫук, эсир пӗр пӑшӑрханмасӑрах тыткӑна лекнӗ Польша офицерӗсене большевиксем персе вӗлернӗ тата эсир ӑна хӑвӑр курнӑ тесе протокол ҫине алӑ пусма пултаратӑр».

Эпӗ ӑна хирӗҫ ҫапла каларӑм: эпӗ ватӑ ҫын, эпӗ 61 ҫула ҫитнӗ ӗнтӗ, ватлӑхра эпӗ хам чуна ҫылӑха кӗртесшӗн мар. Эпӗ тыткӑна лекнӗ поляксем чӑнах та 1940 ҫулхи ҫуркунне Гнездово станцине пынине ҫеҫ кӑтартса пама пултаратӑп.

Ун хыҫҫӑн Германи офицерӗ мана хӑйсене кирлӗ пек показанисем пама ӳкӗтлерӗ, ун пек показанисем парсан мана переездри сторож ӗҫӗнчен кӑларса, эпӗ совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче туса пынӑ ӗҫе, Гнездово станцийӗн начальникне лартма, мана материально пулӑшма пулчӗ.

Тӑлмач вара эпӗ, Катынь вӑрманӗ патӗнче чи ҫывӑхра вырнаҫнӑ Гнездово чугун ҫул станцийӗн начальникӗ пулнӑ ҫын панӑ показанисем Германи командованийӗшӗн питӗ паха пулнине тата эпӗ ҫавӑн пек показанисем панишӗн ӳкӗнмелле пулас ҫукнине палӑртса хӑварчӗ.

Хам питех те йывӑр ӗҫе лекнине тата мана хурлӑхлӑ шӑпа кӗтнине эпӗ ӑнланса илтӗм, ҫапах та эпӗ Германи офицерне ултавлӑ показанисем пама килӗшмерӗм.

Ҫавӑн хыҫҫӑн офицер, эпӗ хамшӑн усӑллӑ ӗҫе ӑнланайманни ҫинчен каласа, ман ҫине кӑшкӑрма, хӗнессипе тата персе вӗлерессипе хӑратма пуҫларӗ. Анчах та эпӗ хамӑн сӑмах ҫинче ҫирӗп тӑтӑм.

Унтан тӑлмач нимӗҫ чӗлхипе пӗр страница ҫине кӗске протокол ҫырчӗ тата унӑн содержанине хӑйӗн сӑмахӗсемпе каласа пачӗ.

Мана тӑлмач каласа панӑ тӑрӑх, вӑл протокол ҫине Польшӑн тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисем Гнездово станцине пынӑ факта ҫеҫ ҫырнӑ. Эпӗ хамӑн показанисене нимӗҫ чӗлхипе ҫеҫ мар, ҫаплах вырӑс чӗлхипе те ҫырса хума ыйтсан, офицер пӗтӗмпех тарӑхса кайрӗ, мана резина патакпа хӗнесе тӑкрӗ те пӳлӗмрен хӑваласа кӑларса ячӗ...».

И. В. Савватеев, 1880 ҫулта ҫуралнӑскер, ҫапла кӑтартса панӑ:

«Гестапӑра эпӗ 1940 ҫулхи ҫуркунне тыткӑна лекнӗ поляксем темиҫе поездпа Гнездово станцине пыни ҫинчен, унтан вӗсем машинӑсемпе ларса кайни ҫинчен, ӑста кайни маншӑн паллӑ мар пулни ҫинчен каларӑм. Эпӗ ҫаплах тата каярахпа ҫав поляксене Мускав—Минск шоссе ҫулӗ ҫинче, вӗсем пысӑк мар ушкӑнсемпе ҫул юсанине курни ҫинчен хушса каларӑм.

Офицер мана ҫапла каларӗ: эсӗ пӑтрататӑн, поляксене эсӗ шоссе ҫинче курма пултарайман, мӗншӗн тесен вӗсене большевиксем персе вӗлернӗ, терӗ, мана ҫавӑн ҫинчен показани пама хушрӗ. Эпӗ килӗшмерӗм.

Нумай вӑхӑт хушши юнаса хӑратнӑ тата ӳкӗтленӗ хыҫҫӑн, офицер тӑлмачпа темӗн ҫинчен нимӗҫле калаҫса илчӗ, унтан тӑлмач кӗске протокол ҫырчӗ те, унта эпӗ панӑ показанисене ҫырса хунӑ тесе, мана алӑ пусма пачӗ. Эпӗ тӑлмачран ҫав протокола хама вулаттарма ыйтрӑм, анчах вӑл мана вӑрҫса тӑкрӗ, протокол ҫине хӑвӑрт алӑ пусма тата халех тухса кайма хушрӗ. Эпӗ пӗр минут тӑхтаса тӑтӑм, тӑлмач стена ҫинче ҫакӑнса тӑракан резина чукмара илчӗ те ман ҫине сулса ячӗ. Ун хыҫҫӑн эпӗ ман ума хурса панӑ протокол ҫине алӑ пусрӑм. Тӑлмач мана киле кайма хушрӗ, мӗн пулни ҫинчен каласа ҫӳрес пулсан мана персе вӗлерессипе ҫинчен асӑрхаттарчӗ...».

«Свидетельсем» шырас ӗҫре асӑннӑ ҫынсемпе ҫеҫ чарӑнса тӑман. Нимӗҫсем НКВД сотрудникӗсем пулнӑ ҫынсене шыраса тупма тата вӗсенчен хӑйсене кирлӗ пек ултавлӑ показанисем илме тӑрӑшнӑ.

Ӑнсӑртран Смоленск облаҫӗнчи УНКВД гаражӗнче ӗҫленӗ Е. Л. Игнатюк рабочие арестлесен, нимӗҫсем ӑна хӑратса тата хӗнесе, унран вӑл гаражри рабочи мар, шофер пулнӑ тата тыткӑнти поляксене персе вӗлернӗ вырӑна хӑй турттарнӑ тесе калакан ултавлӑ показани илме тӑрӑшнӑ.

Ку ыйтупа Е. И. Игнатюк, 1903 ҫулта ҫуралнӑскер, ҫапла каланӑ:

«Полици начальникӗ Алферчик патӗнче эпӗ малтанхи хут допросра пулнӑ чухне, вӑл мана нимӗҫ влаҫӗсене хирӗҫ агитаци сарнӑ тесе айӑпласа, эпӗ НКВД-ра кам пулса ӗҫлени ҫинчен ыйтрӗ. Эпӗ ӑна хам Смоленск облаҫӗнчи НКВД Управленийӗн гаражӗнче рабочи пулса ӗҫлени ҫинчен каларӑм. Алферчик ҫав допросрах мана НКВД Управленийӗнче эпӗ гаражри рабочи мар, шофер пулса ӗҫленӗ тесе показани partарасшӑн пулчӗ.

Алферчик манран хӑйне кирлӗ пек показани илеймен пирки шӑртланса кайрӗ, хӑйӗн адъютанчӗпе пӗрле, ӑна вӑл Жорж тесе чӗнетчӗ, вӗсем манӑн пуҫа тата ҫӑвара темӗнле ҫӗтӗкпе сыхӗҫ лартрӗҫ, брюкине хывса илчӗҫ, сӗтел ҫине вырттарчӗҫ, унтан резина патаксемпе хӗнеме тытӑнчӗҫ.

Ҫавӑн хыҫҫӑн мана татах допроса илсе кайрӗҫ, вара Алферчик мана Польша офицерӗсене 1940 ҫулта Катынь вӑрманӗнче персе вӗлернӗ, ҫакна эпӗ шофер пулса Польша офицерӗсене Катынь вӑрманне турттарас ӗҫе хутшӑннӑ тата вӗсене персе вӗлернӗ чухне хам пулнӑ пирки пӗлнӗ тесе, ултавлӑ показани пама хушрӗ. Эпӗ ҫавӑн пек показанисем пама килӗшсен, Алферчик мана тӗрмерен кӑларма тата полицие ӗҫе вырнаҫтарма, унта ман валли пурӑнма лайӑх условисем туса пама пулчӗ, ҫакӑнпа килӗшмесен, эпир сана персе вӗлеретпӗр, терӗ...

Юлашки хутӗнче мана полицире Александров следователь допрос турӗ, вӑл та мана, Алферчик пекех, Польша офицерӗсене персе вӗлерни ҫинчен ултавлӑ показани пама хушрӗ, эпӗ унӑн патӗнче допросра пулнӑ чухне те ултавлӑ показанисем пама килӗшмерӗм.

Ҫав допрос хыҫҫӑн мана татах хӗнесе пӗтерчӗҫ, унтан гестапӑна ячӗҫ...

...Гестапӑра та мана, полицири пекех, Польша офицерӗсене 1940 ҫулта Катынь вӑрманӗнче совет влаҫӗсем персе вӗлернӗ, ун ҫинчен эпӗ шофер пулнӑ пирки пӗлнӗ тесе, суя показанисем пама хушрӗҫ».

Германин Ют ҫӗршыв министерстви «Катыньри ӗҫ» пирки юри туса хатӗрленӗ ултавлӑ материалсене пичетлесе кӑларнӑ кӗнекере, ҫӳлте асӑннӑ П. Г. Киселевсӑр пуҫне, «свидетельсем» шутне кӗртсе тата ҫаксене асӑннӑ: Годезов (вӑлах Годунов), 1877 ҫулта ҫуралнӑ, Григорий Сильверстов, 1891 ҫулта ҫуралнӑ, Иван Андреев, 1917 ҫулта ҫуралнӑ, Михаил Жигулев, 1915 ҫулта ҫуралнӑ, Иван Кривозерцев, 1915 ҫулта ҫуралнӑ, тата Матвей Захаров, 1893 ҫулта ҫуралнӑ.

Тӗрӗслесе пӑхнӑ тӑрӑх ҫакна палӑртнӑ: ҫӳлте асӑннисенчен иккӗшӗ (Годезовпа Сильверстов) 1943 ҫулта, Смоленск облаҫне Хӗрлӗ Ҫар ирӗке кӑлариччен вилнӗ; тата виҫҫӗшӗ (Андреев, Жигулев тата Кривозерцев) нимӗҫсемпе пӗрле кайнӑ, тен, вӗсене ирӗксӗрлесе илсе кайнӑ-тӑр, юлашкине—Матвей Захарова—Смоленск станцийӗнче сцепщик пулнӑ, нимӗҫсем вӑхӑтӗнче Новые Батеки ялӗнче староста пулса ӗҫленӗскерне, Ятарласа тунӑ Комисси шыраса тупнӑ тата ӑна допрос тунӑ.

Захаров нимӗҫсем унран мӗнле майпа «Катыньри ӗҫ» пирки хӑйсене кирлӗ суя показанисем илни ҫинчен каласа панӑ.

«1943 ҫулхи мартӑн пуҫламӑшӗнче,—тенӗ Захаров,—Гнездоври гестапо сотрудникӗ ман пата хваттере пычӗ, унӑн хушаматне эпӗ пӗлместӗп, вӑл мана офицер хӑй патне чӗнни ҫинчен каларӗ.

Эпӗ гестапӑна пырсан, нимӗҫ офицерӗ тӑлмач урлӑ мана ҫапла каларӗ: «Эсир Смоленск-центральнӑй станцинче сцепщик пулса ӗҫлени пирӗншӗн паллӑ, сирӗн 1940 ҫулта тыткӑна лекнӗ поляксене илсе килнӗ вагонсем Смоленск урлӑ Гнездово станцине кайрӗҫ, ҫавӑн хыҫҫӑн поляксене «Козьи Горы» патӗнче персе вӗлерчӗҫ, тесе показани памалла», терӗ.

Ҫакна хирӗҫ эпӗ: 1940 ҫулта поляксене илсе килнӗ вагонсем чӑнах та Смоленск урлӑ хӗвеланӑҫнелле иртсе кайрӗҫ, анчах вӗсем хӑш станцие ҫитмелле пулнине эпӗ пӗлместӗп, терӗм...

Офицер мана ҫапла каларӗ: эсӗ лайӑх йӗркепе показанисем пама кӑмӑл тумастӑн пулсан, сана ирӗксӗрлесе ҫакна тутарӑп, терӗ. Ҫак сӑмахсем хыҫҫӑн вӑл, резина чукмар илчӗ те, мана хӗнеме пуҫларӗ. Унтан мана тӑрӑхла сак ҫине хучӗҫ те, офицерпе тӑлмач иккӗшӗ пӗрле хӗнерӗҫ. Мана миҫе хутчен ҫапнине эпӗ пӗлместӗп, мӗншӗн тесен эпӗ часах тӑна ҫухатрӑм.

Эпӗ тӑна кӗрсен, офицер мана допрос протоколӗ ҫине алӑ пусма хушрӗ, эпӗ мана хӗненине тата персе вӗлерессипе хӑратнине пула, пӑваш чунлӑ пулса, суя показанисем патӑм тата протокол ҫине алӑ пусрӑм. Протокол ҫине алӑ пуснӑ хыҫҫӑн мана гестапӑран ячӗҫ...

Мана гестапӑна чӗнсе илнӗ хыҫҫӑн темиҫе кун иртсен, 1943 ҫулхи март уйӑхӗн варри тӗлӗнче, ман пата хваттере тӑлмач пычӗ те, эпӗ нимӗҫ генералӗ патне кайса хамӑн показанисене тепӗр хут ҫирӗплетсе каламалли ҫинчен пӗлтерчӗ.

Эпир генерал патне пырсан, вӑл манран: эсӗ хӑвӑн показанисене ҫирӗплетсе калатӑн-и, тесе ыйтрӗ. Эпӗ ҫирӗплететӗп тесе каларӑм, мӗншӗн тесен мана тӑлмач ҫул ҫинчех, эпӗ хамӑн показанисене ҫирӗплетмесен, малтанхи хут гестапӑра тӳсниччен те ытларах асап тӳсесси ҫинчен асӑрхаттарчӗ.

Татах асаплантарасран хӑраса, эпӗ хамӑн показанисене ҫирӗплетсе калатӑм. Унтан мана тӑлмач сылтӑм алла ҫӳлелле ҫӗклеттерчӗ те, ҫапла каларӗ: эсӗ присяга йышӑнтӑн, халӗ ӗнтӗ киле кайма пултаратӑн, терӗ».

Ҫакна палӑртнӑ: нимӗҫсем ытти ҫынсенчен те ӳкӗтлесе, хӑратса тата хӗнесе, сӑмахран, Смоленскри тӗрме начальникӗн заместителӗ пулнӑ Н. С. Коверзневран, ҫав тӗрме работникӗ пулнӑ В. Г. Ковалевран тата ыттисенчен те хӑйсене кирлӗ пек показанисем илме тӑрӑшнӑ.

Кирлӗ чухлӗ свидетельсем тупас ӗҫ ӑнӑҫлӑн вӗҫленменнине пула нимӗҫсем Смоленск хулинче тата хула ҫывӑхӗнчи ялсенче ҫакӑн пек листовкӑсем ҫапса тухнӑ, ҫав листовкӑн чӑн-чӑн экземплярӗ Ятарласа тунӑ Комисси материалӗсенче пур:

«Халӑха чӗнсе калани

1940 ҫулта Гнездово-Катынь шоссе ҫулӗ патӗнче «Козьи Горы» вӑрманӗнче Польша офицерӗсене тата священниксене большевиксем массӑллӑн персе вӗлерни ҫинчен кам сведенисем пама пултарать?

Гнездоваран «Козьи Горы» патне автотранспортсем кайнине кам курнӑ тата персе вӗлернисене кам курнӑ е илтнӗ?

Ҫавӑн ҫинчен каласа пама пултаракан ҫынсене кам пӗлет?

Кашни пӗлтерӳшӗн награда параҫҫӗ.

Пӗлтерӳсене Смоленска—нимӗҫ полицине: Музейнӑй урам. 6, Гнездовӑна—нимӗҫ полицине, вокзал патӗнчи 105-мӗш номерлӗ ҫурта ярса памалла.

Фосс

полевой полици лейтенанчӗ».

1943 ҫулхи майӑн 3-мӗшӗ».

Ҫавӑн пек пӗлтерӗве нимӗҫсем Смоленскра кӑларакан «Новый путь» хаҫатра 1943 ҫ. майӑн 6-мӗшӗнче, (35 (157)-мӗш №) пичетлесе кӑларнӑ.

Нимӗҫсем «Катыньри ӗҫ» пирки хӑйсене кирлӗ сведенисем панӑшӑн наградӑсем пама пулни ҫинчен Ятарласа тунӑ Комисси ыйтса пӗлнӗ свидетельсем—Смоленск хулинче пурӑнакансем О. Е. Соколова, Е. А. Пущина, И. И. Бычков, Г. Т. Бондарев, Е. П. Устинов тата ыттисем те каласа панӑ.

Катыньри вилтӑприсене йӗркелени

Нимӗҫсем, «свидетельсем» шыранипе пӗрлех, Катынь вӑрманӗнчи вилтӑприсене хӑйсене кирлӗ пек туса хатӗрлеме тытӑннӑ: тыткӑна лекнӗ поляксен, нимӗҫсем хӑйсем вӗлернӗскерсен тумтирӗсенчен 1940 ҫулхи апрельтен кайран, урӑхла каласан, нимӗҫсем поляксене большевиксем персе вӗлернӗ тесе сарнӑ провокациллӗ ирӗсӗр элекре кӑтартнӑ вӑхӑтран кайрантарах паллӑ тунӑ документсене пурне те кӑларса илнӗ; хӑйсен провокациллӗ ирӗсӗр элекне тӑрӑ шыв ҫине кӑларма пултаракан япаласене пӗрне те хӑварман.

Ятарласа тунӑ Комисси тӗпчесе пӗлнӗ тӑрӑх ҫакна палӑртнӑ: нимӗҫсем ҫав ӗҫре тыткӑна лекнисен 126-мӗш №-лӗ лагерӗнчен ятарласа суйласа илнӗ 500 ӗҫ ҫынна, вырӑссен тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисене ӗҫлеттернӗ.

Ятарласа тунӑ Комисси аллинче ун ҫинчен свидетельсем каласа панисем нумай.

Вӗсенчен асӑннӑ лагерьте ӗҫленӗ врачсем каласа пани ҫине уйрӑмах тимлӗн пӑхмалла.

Смоленска нимӗҫсем оккупацилесе тӑнӑ кунсенче 126-мӗш №-лӗ лагерьте ӗҫленӗ А. Т. Чижов врач ҫапла каласа панӑ:

«...1943 ҫулхи март уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче тыткӑна лекнисен Смоленскри 126-мӗш №-лӗ лагерӗнчен сывлӑх енчен ҫирӗпрех ҫынсене темиҫе ушкӑн, пурӗ 500 ҫынна яхӑн, окоп ӗҫне яма тесе суйласа илчӗҫ. Кайран тыткӑнта пулнӑ ҫав ҫынсенчен пӗри те лагере таврӑнмарӗ».

Нимӗҫсем вӑхӑтӗнче ҫав лагерьтех ӗҫленӗ В. А. Хмыров врач ҫапла каласа панӑ:

«Эпӗ ҫакна пӗлетӗп: 1943 ҫулхи февралӗн иккӗмӗш ҫур уйӑхӗнче е мартӑн пуҫламӑшӗнче пирӗн лагерьтен тыткӑна лекнӗ красноармеецсенчен 500 ҫынна яхӑн ӑсатрӗҫ, ӑста илсе кайнине эпӗ пӗлместӗп. Вӗсене окоп ӗҫне ярасҫӗ тесе ӑсатрӗҫ, ҫавӑнпа та сывлӑх енчен чи ҫирӗп ҫынсене суйласа илчӗҫ...».

О. Г. Леньковская медсестра, А. И. Тимофеева медсестра, П. М. Орлова, Е. Г. Добросёдова свидетельницӑсем тата В. С. Иссетиков свидетель те ҫавӑн пек показанисем панӑ.

Тыткӑна лекнӗ 500 красноармеецӑ чӑннипе ӑста илсе кайни А. М. Московская свидетельница каласа панинчен курӑнать.

Смоленск хули хӗрринче пурӑннӑ тата оккупаци вӑхӑтӗнче нимӗҫсен пӗр ҫар чаҫӗнче кухньӑра ӗҫленӗ Александра Михайловна Московская гражданка 1943 ҫулхи октябрӗн 5-мӗшӗнче нимӗҫ оккупанчӗсен вӑрӑ-хурахла тискер ӗҫӗсене тӗпчесе тӗрӗслекен Чрезвычайнӑй Комиссие паха показанисем пама хӑйне чӗнме ыйтса заявлени панӑ.

Хӑйне чӗнсе илсен, вӑл Ятарласа тунӑ Комиссие, 1943 ҫулхи апрель уйӑхӗнче ӗҫе каяс умӗн Днепр сыранӗ ҫумӗнче ларакан хӑйӗн картишӗнчи сарайне вутӑ илме кӗрсен, унта палламан ҫынна тупни ҫинчен, вӑл тыткӑна лекнӗ вырӑс ҫар ҫынни пулни ҫинчен каласа панӑ.

А. М. Московская, 1922 ҫулта ҫуралнӑскер, ҫапла каласа панӑ:

«...Унпа калаҫнӑ хыҫҫӑн эпӗ ҫакна пӗлтӗм:

Унӑн хушамачӗ Егоров, ячӗ Николай, Ленинград ҫынни. 1941 ҫул вӗҫӗнчен пуҫласа вӑл пӗрмаях нимӗҫсен Смоленск хулинчи тыткӑна лекнисен 126-мӗш №-лӗ лагерӗнче пулнӑ. 1943 ҫулхи мартӑн пуҫламӑшӗнче ӑна лагерьтен тыткӑна лекнӗ темиҫе ҫӗр ҫынпа пӗрле колоннӑпа Катынь вӑрманне илсе кайнӑ. Унта вӗсене, ҫав шутрах Егорова та, вилтӑприсене чавса уҫтарнӑ, вӗсенче Польша офицерӗсен формисене тӑхӑннӑ вилӗ ӳтсем пулнӑ, ҫав ӳтсене шӑтӑксенчен кӑларттарнӑ тата вӗсен кӗсйисенчен документсене, ҫырусене, фотоӳкерчӗксене тата ытти мӗнпур япалисене илтернӗ. Нимӗҫсем ҫав вилнӗ ҫынсен кӗсйисенче нимӗн те хӑвармалла мар тесе ҫирӗп приказсем панӑ. Тыткӑна лекнӗ икӗ ҫынна, нимӗҫ офицерӗ вӗсем тӗрӗслесе хыҫҫӑн вилнӗ ҫынсен кӗсйисенче темӗнле хутсем тупнине пула, ҫавӑнтах персе вӗлернӗ.

Вилнӗ ҫынсен тумтиррисенчи кӗсйисенчен илнӗ япаласене, документсене тата ҫырусене нимӗҫ офицерӗсем пӑхса тухнӑ, унтан тыткӑнрисене ҫав хутсенчен хӑшпӗрисене вилнӗ ҫынсен кӗсйисене каялла чиктернӗ, ыттисене пухнӑ япаласемпе тата документсемпе пӗр купана пӑрахнӑ та, ҫунтарса янӑ.

Кунсӑр пуҫне, Польша офицерӗсен виллисен кӗсйисене нимӗҫсем хӑйсем илсе пынӑ ещӗксенчен, чемодансенчен (тӗрӗссипех астумастӑп) кӑларса илнӗ темӗнле хутсем чиктернӗ.

Тыткӑна лекнисем Катынь вӑрманӗнче ҫав тери йывӑр условисенче, уҫӑ ҫӗртех пурӑннӑ тата вӗсене вӑйлӑ хураланӑ...

1943 ҫулхи апрель уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче нимӗҫсем палӑртса хунӑ ӗҫсем вӗҫленнӗ пулмалла, мӗншӗн тесен тыткӑна лекнисенчен 3 кун хушши никама та ӗҫлеттермен...

Сасартӑк ҫӗрле вӗсене пурне те тӑратнӑ та тасталла илсе кайнӑ. Хурала вӑйлӑлатнӑ пулнӑ. Егоров ырӑ мар япала пулассине сиснӗ тата мӗн пулса иртнине пурне те уйрӑмах тимлӗн сӑнама пуҫланӑ. Вӗсем 3—4 сехет хушши паллӑ мар ҫӗрелле утнӑ. Вара вӑрманти темӗнле уҫланкӑра пӗр шӑтӑк патне ҫитсен чарӑннӑ. Вӑл тыткӑна лекнисенчен пӗр ушкӑнне ыттисенчен уйӑрса шӑтӑк патне хӑваласа кайнине, унтан персе вӗлерме тытӑннине курнӑ.

Тыткӑна лекнисем пӑлханма, шавлама, куҫкалама пуҫланӑ. Егоровран инҫех мар тыткӑна лекнисенчен темиҫе ҫын хурала тапӑннӑ, ытти хуралҫӑсем ҫав вырӑна чупса пынӑ. Егоров, ҫав пӑлханнӑ вӑхӑтпа усӑ курса, тӗттӗм вӑрман ӑшнелле тарма пуҫланӑ, хӑй хыҫӗнче вӑл кӑшкӑрнине тата пӑшал сассисене илтнӗ.

Манӑн аса ӗмӗрлӗхе кӗрсе юлнӑ ҫав тискер ӗҫ ҫинчен каласа панӑ хыҫҫӑн эпӗ Егорова питех те шеллерӗм, ӑна ман пата пӳлӗме кӗрсе ӑшӑнма тата вӑй иличчен ман патра пытанса пурӑнма чӗнтӗм. Анчах та Егоров килӗшмерӗ... Вӑл ҫапла каларӗ: кирек мӗнле пулсан та, паян каҫхине каятӑп, фронт урлӑ Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсем патне ҫитме тӑрӑшатӑп, терӗ.

Анчах та Егоров ҫав каҫхине каяйман. Ирхине эпӗ тӗрӗслесе пӑхма пырсан, вӑл сарайрахчӗ. Ҫӗрле вӑл кайма тытӑннӑ, анчах пӗр аллӑ утӑм кайсанах ҫав тери вӑйсӑрланнине туйсан, ирӗксӗрех каялла ҫаврӑннӑ. Ҫакӑ лагерьте нумай вӑхӑт хушши начарлански пыниччен тата юлашки кунсенче выҫӑ пурӑнниччен килнӗ пулмалла. Эпир унӑн ман пата пӗр-икӗ куна юлса ҫирӗпленес пулать тесе йышӑнтӑмӑр. Егорова апатлантарнӑ хыҫҫӑн, эпӗ ӗҫе кайрӑм.

Каҫхине эпӗ ӗҫрен таврӑнсан, манӑн кӳршӗсем—Мария Ивановна Баранова тата Екатерина Викторовна Кабановская мана ҫакӑн ҫинчен пӗлтерчӗҫ: кӑнтӑрла нимӗҫ полицейскисем облава тунӑ чухне манӑн сарайра тыткӑна лекнӗ красноармеецӑ тупнӑ, ӑна вӗсем хӑйсемпе пӗрле илсе кайнӑ».

Хӑйӗн сарайӗнче тыткӑна лекнӗ Егорова тупнӑ май Московскаяна гестапӑна илсе кайнӑ, унта ӑна тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннине пытарса усранӑ тесе айӑпланӑ.

Гестапӑра допроссем тунӑ чухне Московская ҫав тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннипе ҫыхӑну тытнине иепле те йышӑнман, вӑл унӑн сарайӗнче пулни ҫинчен нимӗн те пӗлмен тесе ҫирӗплетнӗ. Московскаяна хӑйне йышӑнтарайман, ҫавӑнпа пӗрлех тыткӑна лекнӗ Егоров та Московская ҫинчен нимӗн те каламан пулмалла, ҫавӑнпа та вара ӑна гестапӑран кӑларса янӑ.

Ҫав Егоровах Московскаяна ҫакна каласа панӑ: Катынь вӑрманӗнче ӗҫленӗ тыткӑнти ҫынсен пӗр пайӗ, вилнӗ ҫынсене чавса кӑларнисӗр пуҫне, Катынь вӑрманне ытти ҫӗртен вилӗсем турттарса пынӑ. Турттарса пынӑ вилӗсене малтан чавса кӑларнисемпе пӗрле шӑтӑка янӑ.

Катыньри вилтӑприсем патне нимӗҫсем ытти вырӑнсенче персе вӗлернӗ ӳтсене нумай турттарса пынӑ факта П. Ф. Сухачев инженер-механик показанийӗсем те ҫирӗплетсе кӑтартаҫҫӗ.

П. Ф. Сухачев, 1912 ҫулта ҫуралнӑскер, «Росглавхлеб» системин инженер-механикӗ, нимӗҫсем вӑхӑтӗнче Смоленск хулинчи армантра машинист пулса ӗҫленӗскер, 1943 ҫулхи октябрӗн 8-мӗшӗнче хӑйне чӗнме ыйтса заявлени панӑ.

Ятарласа тунӑ Комиссие чӗнсе илсен, вӑл ҫапла каласа панӑ:

«...Пӗррехинче армантра 1943 ҫулхи март уйӑхӗн варринче эпӗ пӑртак ырӑсла пӗлекен нимӗҫ шоферӗпе калаҫкалама пуҫларӑм. Вӑл Савенки ялне ҫар чаҫӗсем валли ҫӑнӑх турттарса кайнине тата тепӗр кунне Смоленска каялла таврӑннине пӗлсен, ялта ҫу таврашӗсем сутӑн илес тесе, эпӗ унтан мана хӑйпе пӗрле илсе кайма ыйтрӑм. Эпӗ нимӗҫ машинипе ларса кайсан, маншӑн пропусксем тӗрӗслекен пункра тытса чарас хӑрушлӑх пулас ҫуккине шута илтӗм. Нимӗҫ шоферӗ тӳлевпе илсе кайма килӗшрӗ. Ҫав кунах, каҫхине вуннӑмӗш сехетре, эпир Смоленск—Витебск шоссе ҫулӗ ҫине тухса кайрӑмӑр. Эпир машина ҫинче иккӗнччӗ—эпӗ тата нимӗҫ-шоферӗ. Каҫ сутӑччӗ, уйӑхлӑччӗ, анчах та ҫул ҫинче тӗтре тӑнӑ пирки умрине курма йывӑртарахчӗ. Смоленскран 22—23 километрта, шоссе ҫинчи ҫӗмӗрнӗ «кӗпер тӗлӗнче, чылай чӑнкӑ вырӑнтан анса пӑрӑнса иртмелли вырӑн тунӑччӗ. Эпир шоссе ҫинчен пӑрӑнса иртмелли вырӑна анма тытӑннӑччӗ, сасартӑк тӗтре ӑшӗнчен пире хирӗҫ килекен грузовой машина курӑнса кайрӗ. Тен, пирӗн машинӑн тормозӗсем йӗркеллӗ пулманран, те шоферӗ опытсӑртан, эпир машинӑна чарса ӗлкӗреймерӗмӗр, пӑрӑнса иртмелли вырӑн тӑвӑр пулнӑ пирки хирӗҫ килекен машинӑна пырса ҫапӑнтӑмӑр. Хирӗҫ килекен машинӑн шоферӗ айккинелле пӑрма ӗлкӗрнипе пула хытах пырса ҫапӑнмарӑмӑр, машинӑсен хӗррисем ҫеҫ ҫапӑнса шуса кайрӗҫ. Анчах та хирӗҫ килекен машинӑн сылтӑм кустӑрми канава лекнине пула вӑл тӑвайккинелле тӳнсе кайрӗ. Пирӗн машина кустӑрмисем ҫинчех юлчӗ. Эпир шоферпа кабинӑран хӑвӑрт тухрӑмӑр та тӳнсе кайнӑ машина патне пытӑмӑр. Мана вилӗ шӑрши хытӑ ҫапни тӗлӗнтерчӗ, вӑл машина ҫинчен сарӑлнӑ пулмалла. Ҫывӑхарах пырсан, эпӗ машинӑна брезентпа витнӗ тата вӗренпе туртса ҫыхнӑ груз тултарнине куртӑм. Пырса ҫапӑннипе вӗренӗсем татӑлса кайнӑ, грузӑн пӗр пайӗ тӑвайккине тӑкӑннӑ. Вӑл ҫав тери тискер грузчӗ. Вӗсем ҫар тумтирӗ тӑхӑннӑ ҫынсен виллисемччӗ.

Эпӗ астунӑ тӑрӑх, машина патӗнче 6—7 ҫын тӑратчӗ, вӗсенчен пӗри нимӗҫ-шофер, иккӗшӗ автоматсемпе хӗҫпӑшалланнӑ нимӗҫсем, ыттисем тыткӑна лекнӗ вырӑссемччӗ, мӗншӗн тесен вӗсем вырӑсла калаҫатчӗҫ тата тумтирӗсем те вырӑссенчӗ.

Нимӗҫсем мана лартса каякан шофера вӑрҫма тытӑнчӗҫ, унтан машинине кустӑрми ҫине тӑратса лартма хӑтланса пӑхрӗҫ. Тепӗр икӗ минутран авари пулнӑ вырӑна тата икӗ грузовой машина ҫитсе чарӑнчӗҫ. Ҫав машинӑсем ҫинчен пирӗн пата нимӗҫсем тата тыткӑна лекнӗ вырӑссем пурӗ 10 ҫынна яхӑн пычӗҫ. Вӗсем пурте пӗрле машинӑна тӑратма тытӑнчӗҫ. Меллӗрех вӑхӑтпа усӑ курса, эпӗ тыткӑна лекнӗ пӗр вырӑсран хуллен: «Мӗнле япала ку?», тесе ыйтрӑм. Вӑл мана хуллен ҫапла ответлерӗ: «Темиҫе каҫ ӗнтӗ Катынь вӑрманне вилӗсем турттаратпӑр», терӗ.

Тӳнсе кайнӑ машинӑна тӑратса ҫитерменччӗ-ха, нимӗҫ унтер-офицерӗ пирӗн пата пычӗ те, мана тата манӑн шофера халех малалла кайма хушрӗ.

Пирӗн машина питех аманманччӗ, шофер ӑна пӑртак айӑккинелле пӑрса, шоссе ҫине илсе тухрӗ, эпир вара малалла кайрӑмӑр.

Кайран пырса ҫитнӗ, брезентпа витнӗ икӗ машина патӗнчен иртнӗ чухне те вӗсенчен вилӗ шӑрши вӑйлӑ кӗретчӗ».

Сухачев каласа панисем тӗрӗс пулнине оккупаци вӑхӑтӗнче полицейски пулса ӗҫленӗ Владимир Афанасьевич Егоров каланисем те ҫирӗплетсе кӑтартаҫҫӗ.

Егоров ҫапла каласа панӑ: вӑл полицире служба тӑнӑ чухне Мускав—Минск тата Смоленск—Витебск шоссе ҫулӗсем пӗр-пӗрин урлӑ каҫнӑ вырӑнти кӗпере хурал тӑнӑ, ҫавӑн чухне вӑл 1943 ҫулхи мартӑн вӗҫӗнче тата апрелӗн малтанхи кунӗсенче ҫӗрле темиҫе хутчен Смоленск еннелле брезентпа витнӗ пысӑк грузовой машинӑсем иртнине курнӑ, вӗсенчен вилӗ шӑрши вӑйлӑ кӗнӗ. Машинӑсен кабинисенче тата хыҫалта брезентсем ҫинче темиҫешер ҫын ларнӑ, вӗсенчен хӑшпӗрисем хӗҫпӑшаллӑ нимӗҫ ҫыннисем пулнӑ, ун пирки иккӗленмелли ҫук.

Хӑй курнисем ҫинчен Егоров Архиповка ялӗнчи полицейски участокӗн начальникне Кузьма Демьянович Головнева каласа панӑ, лешӗ ӑна «чӗлхене ҫыртма» хушнӑ тата ҫапла каланӑ: «Вӑл пирӗн ӗҫ мар, пире нимӗҫсен ӗҫне хутшӑнма кирлӗ мар», тенӗ.

Нимӗҫсем грузовой машинӑсемпе Катынь вӑрманне вилӗсем турттарни ҫинчен тата Флор Максимович Яковлев-Соколов, 1896 ҫулта ҫуралнӑскер, Смоленскри столовӑйсен трестӗнчи столовӑйсен снабжени агенчӗ, нимӗҫсем вӑхӑтӗнче Катынь участокӗнчи полици начальникӗ пулнӑскер, показани панӑ.

Вӑл пӗррехинче 1943 ҫулхи апрелӗн пуҫламӑшӗнче шоссе ҫулӗ ҫинчен Катынь вӑрманне брезентсемпе витнӗ тӑватӑ грузовой машина кӗрсе кайнине, вӗсем ҫинче автоматсемпе тата винтовкӑсемпе хӗҫпӑшалланнӑ темиҫе ҫын ларнине курни ҫинчен, ҫав машинӑсенчен вилӗ шӑрши вӑйлӑ ҫапни ҫинчен показани панӑ.

Свидетельсем панӑ показанисем тӑрӑх нимӗҫсем поляксене ытти вырӑнсенче те персе вӗлерни ҫинчен ҫирӗплетсе калама пулать. Вӗсен виллисене Катынь вӑрманне турттарса пырса, нимӗҫсем виҫӗ тӗллев лартнӑ: пӗрремӗшӗ, хӑйсен ирсӗр ӗҫӗсен йӗрне пытарасшӑн; иккӗмӗшӗ, хӑйсен преступленийӗсене Совет влаҫӗ ҫине йӑвантарасшӑн; виҫҫӗмӗшӗ, Катынь вӑрманӗнчи вилтӑприсенче пулнӑ, «большевиксем вӗлернӗ» тенӗ ҫынсен шутне ӳстересшӗн пулнӑ.

Катыньри вилтӑприсене курма „экскурсисем" ирттерни

1943 ҫулхи апрель уйӑхӗнче, Катынь вӑрманӗнчи вилтӑприсем ҫинчи хатӗрленӳ ӗҫӗсене туса пӗтерсен, нимӗҫ оккупанчӗсем хаҫатсем ҫинче те, радио тӑрӑх та ҫыхӑ агитацилеме тытӑннӑ, нимӗҫ оккупанчӗсем тыткӑна лекнӗ поляксем тӗлӗшпе хӑйсем тунӑ тискер ӗҫсене Совет влаҫӗ ҫине йӑвантарма хӑтланнӑ. Ҫав провокациллӗ агитацин пӗр меслечӗ вӑл Смоленскра тата унӑн ҫывӑхӗнче пурӑнакансем, ҫавӑн пекех нимӗҫ захватчикӗсем оккупациленӗ ҫӗршывсенчи е тата нимӗҫсене пӑхӑнса тӑракан ҫӗршывсенчи «делегацисем» Катыньри вилтӑприсене пырса курассине организацилесси пулнӑ.

Ятарласа тунӑ Комисси Катыньри вилтӑприсем ҫине пырса курнӑ «экскурсие» хутшӑннӑ чылай свидетельсенчен тӗпчесе ыйтса пӗлнӗ.

К. П. Зубков свидетель, врач патологоанатом, Смоленскра сутпа медицинӑн эксперчӗ пулса ӗҫленӗскер, ятарласа тунӑ комиссие ҫапла каласа панӑ:

«...Вилӗсен тумтирӗсем, уйрӑмах шинельсем, атӑсем тата чӗн пиҫиххисем лайӑх сыхланса юлнӑччӗ. Тумтирсем ҫумӗнчи тимӗр япаласем—чӗн пиҫиххисем ҫинчи тӑхасем, тӳмесем, крючоксем, ботинкӑсем ҫинчи пӑтасем

(Малалли 3-мӗш страницӑра).

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем поляксен тыткăна лекнĕ офицерĕсене Катынь вăрманĕнче персе вĕлернине тĕпчесе пĕлме Ятарласа тунă Комисси

П Ĕ Л Т Е Р Н И

(Юлашки).

тутăхса кайманччĕ, хăшпĕр чухне тата йăлтăркка тимĕрсен çутти те çаплипех юлнăччĕ. Вилесен пăхса сăнама май пур пайĕсем — сăн-пичĕсем, майĕсем, аллисем вараланса пĕтнĕччĕ, симĕс тĕслĕччĕ, хăшпĕр чухне хăмăр тĕслĕччĕ, анчах ӳчĕсем пĕтĕмпех çĕрсе арканса пĕтменччĕ. Хăшпĕр чухне вилесен çиеле тухнă тип тымарĕсем, шуралса кайнăскерсем, тата шăнăрĕсем курăнатчĕç. Эпĕ вилтăприсене чакалана çĕрте пулнă чухне пĕр пысăк шăтăк тĕпĕнче вилесене йĕркелекен тата уптан кăларакан çынсем ĕçлетчĕç. Вилесене вĕсем кĕреçесемпе тата ытти хатĕрсемпе чавса кăларатчĕç, виле çынсене аллисенчен, урисенчен, тумтирĕсенчен туртса кăларса, алла илсе пĕр çĕртен тепĕр вырăна куçаратчĕç. Çавăн чухне çĕрсе кайнă е уйрăм пайĕсем татăлнă виле пĕрре те тупăнмарĕ.

Çӳлте асăннисене пурне те шута илсе, эпĕ çакăн пек зывод тутрăм: вилесем çĕр айĕнче нимĕçсем калани вăхăт хушши—виçĕ çул хушши выртман, вилесем çĕр айĕнче уптан чылай сахалтарах вăхăт хушши выртнă. Вилесене ушкăнпа пĕрле пуxса пытарнă шăтăксенче вĕсем уйрăммăн пытарнă çĕртинчен хăвăртрах çĕрине, вилесене тупăксемсĕр пытарсан вĕсем хăвăрт çĕрнине пĕлсе тăрса, эпĕ çакăн пек вывод турăм: поляксене ушкăнĕ-ушкăнĕпе пĕр çулталăк çурă каялла персе вĕлернĕ, тен, вĕсене 1941 çулхи кĕркунне е 1942 çулхи çуркунне персе вĕлернĕ. Виле шăтăкĕсене чавнă çĕрте пулса, эпĕ çав питĕ тискер ĕçе нимĕçсем тунине лайăх пĕлсе çитрĕм».

Вилесен тумтирĕсем, тумтирсем çинчи тимĕр пайсем, атăсем çĕрменнине тата тутăхманнине, çавăн пекех тата вилесем çĕрменни çинчен Ятарласа тунă Комисси тĕпчесе ыйтса пĕлнĕ нумай свидетельсем, Катыньри вилтăприсем çине «экскурсие» кайса курнă çынсем каласа панă. Çав шутра кун çинчен Смоленскри водопроводăн заведующийĕ **И. З. Куцев**, Катыньри шкулти учительница **Е. Н. Ветрова**, Смоленскри çыхăну уйрăмĕн телефонисткки **Н. Г. Щедрова**, Борок ялĕнчи çын **М. А. Алексеев**, Новые Батеки ялĕнчи çын **Н. Г. Кривозерцев**, Гнездово станцийĕн дежурнăйĕ **И. В. Савватеев**, Смоленск хулинчи гражданка **Е. А. Пущина**, Смоленскри 2-мĕш больницăри врач **Т. А. Сидорук**, çав больницăри врач **П. М. Кесарев** тата ыттисем те каласа панă.

Нимĕçсем хăйсен тискер ĕçĕсен йĕрĕсене пытарма хăтланни

Нимĕçсем организациленĕ «экскурсисем» вĕсене хăйсен тĕллевĕсене пурнăçлама пулăшман, кирлĕ результатсем паман. Вилтăприсем патне кайса курнă çынсем пурте çавăнта нимĕç фашисчĕсем питĕ сĕмсĕр тата усăнах курăнса тăракан провокациллĕ ĕç тунине лайăх пĕлсе çитнĕ. Çавăнпа та нимĕçсен влаçĕсем иккĕленекен çынсене куп пирки калаçма чармашкăн мерăсем йышăннă.

Ятарласа тунă Комисси аллинче чылай свидетельсем каласа панисене çырса илнисем пур. Çав свидетельсем нимĕçсен влаçĕсем çав тискер ĕçсем пирки иккĕленекенсене е вĕсен провокацине ĕненмен çынсене мĕнле хĕсĕрлени çинчен каласа кăтартнă. Ун пек çынсене ĕçрен кăларса янă, тытса хупнă, персе вĕлеретпĕр тесе хăратнă. «Чĕлхене чарма пĕлменшĕн» нимĕçсем икĕ çынна персе пăрахнине Комисси тĕпчесе пĕлнĕ: ĕлĕк нимĕçсен полицейскийĕ пулнă **Загайнова** тата **А. М. Егорова**, Катынь вăрманĕнчи вилтăприсене чавнă çĕрте ĕçленĕскерсене, нимĕçсем персе вĕлернĕ.

Катынь вăрманĕнчи вилтăприсене кайса курнă хыççăн хăйсем иккĕленнине каласа панă çынсене нимĕçсем хĕсĕрлени çинчен çак çынсем: Смоленскри 1-мĕш аптекăри уборщица **М. С. Зубарева**, Смоленск хулинчи Сталински районĕн сывлăх пайĕн санитари врачĕн помощникĕ **В. Ф. Козлова** тата ыттисем те каласа кăтартнă.

Полици Катынь участокĕнчи начальникĕ пулнă **Ф. М. Яковлев-Соколов** çапла каланă:

«Нимĕçсен комендатурине хытă шиклентерекен лару-тăру пулса тăчĕ, полици вырăнти аппарачĕсене тем пулсан та, пур майсемпе те, сиенлĕ сăмахсем сăрăлассине чарса лартма, «Катыньри ĕç» пирки иккĕленекенсене пурне те тытса хупма васкавлă кăтартусем пачĕç.

Эпĕ полици участокри начальникĕ пулнă пирки мана çавăн пек кăтартусем 1943 çулхи май уйăхĕн вĕçĕнче нимĕçсен Катынь ялĕнчи коменданчĕ **Браунг** обер-лейтенант тата июнь уйăхĕн пуçламăшĕнче Смоленск районĕнчи полиция начальникĕ **Каменецкий** парĕç.

Эпĕ хамăн участокри полицейскисене инструктивлă канашлăва пухрăм. Канашлура эпĕ çапла хушрăм: вам нимĕçсем Польшăн тыткăна лекнĕ çыннисене большевиксем персе вĕлернĕ пирки пĕлтернине ĕненменни çинчен, çав пĕлтерĕве шанма çукки, кун пирки иккĕленни çинчен калать, çавсене пурне те тытса полицие илсе пымалла, терĕм.

Нимĕçсен влаçĕсен çав кăтартăвĕсене пурнăçласа, эпĕ хамăн шухăш-кăмăлăма хирĕç пытăм, мĕншĕн тесен «Катыньри ĕçе» эпĕ нимĕçсен провокацийĕ тесе шутлаттăм. Катынь вăрманне «экскурсие» хам кайса курнă хыççăн, эпĕ çав ĕç вăл нимĕçсен провокацийĕ пулнине пĕтĕмпех ĕнентĕм».

Вырăнти халăх Катыньри вилтăприсем патне «экскурсие» кайса çӳрени кирлĕ результатсем паманнине кура, нимĕçсен оккупаци влаçĕсем 1943 çулта çулла виле шăтăкĕсене питĕрме хушнă.

Смоленскран каялла чакас умĕн нимĕçсен оккупаци влаçĕсем хăйсен тискер ĕçĕсен йĕрĕсене васкавлăн пĕтерсе хăварма тăрăшнă. «537-мĕш строительнăй батальонăн штабĕ» тăнă дачăна тĕппипех çунтарса янă. Виçĕ хĕрачана—**Алексеевăна, Михайловăна** тата **Конаховскаяна** нимĕçсем Борок ялĕнче шыраса çӳренĕ, вĕсене нимĕçсем хăйсемпе пĕрле илсе каясшăн, тен, вĕсене вĕлересшĕн пулнă. Нимĕçсем хăйсен тĕп «свидетельне» **П. Г. Киселева** шыранă, анчах лешĕ хăйĕн килйышĕпе тарса пытанма ĕлкĕрнĕ. Нимĕçсем унăн çуртне вут тивертсе çунтарса янă.

Нимĕçсем ытти «свидетельсене» те — Гнездово станцийĕн начальникĕ пулнă **С. В. Иванова**, çав станци дежурнăйĕ пулнă **И. В. Савватеева** тата Смоленск станцийĕнче сцепщик пулнă **М. Д. Захарова** тытса кайма тăрăшнă.

Смоленскран каялла чакас умĕнхи чи юлашки кунсенче нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем **Базилевскипе Ефимов** профессорсене шыранă. Вĕсем иккĕшĕ те вăхăтра тарса пытанма ĕлкĕрнĕ, çавна пула кăна тытса илсе кайассинчен е вĕлерессинчен çăлăнса юлнă.

Анчах нимĕçсен фашистла захватчикĕсем хăйсен преступленийĕсене тата хăйсен йĕрĕсене пытарма ĕлкĕреймен.

Судпа медицина экспертизи чавса кăларнă вилесене сăнаса пăхни тыткăна лекнĕ поляксене нимĕçсем хăйсем персе вĕлернине çирĕплетсе кăтартса парать.

Аяларахра судпа медицина экспертизин актне илсе кăтартатпăр.

Судпа медицина экспертизин акчĕ

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Польшăн тыткăна лекнĕ офицерĕсене Катынь вăрманĕнче (Смоленск хули çывăхĕнче) персе вĕлернине йĕрлесе тĕпчесе пĕлме Ятарласа тунă Комисси кăтарту панă тăрăх, судпа медицинăн экспертизнăйĕ комиссийĕ, çак составпа:

СССР Сывлăх Халăх Комиссариачĕн судпа медицинăн главнăй эксперчĕ, СССР Сывлăх Халăх Комиссариачĕн суд медицинин наукăпа тĕпчев институчĕн директорĕ **В. И. Прозоровский**;

Мускаври Государствăн 2-мĕш медицина институчĕн профессорĕ, медицина наукисен докторĕ **В. М. Смольянинов**;

Патологи анатомийĕн профессорĕ, медицина наукисен докторĕ **Д. Н. Выропаев**;

СССР Сывлăх Халăх Комиссариачĕн суд медицинин наукăпа тĕпчев институчĕн танатологи уйрăмĕн аслă научнăй сотрудникĕ, доктор **П. С. Семеновский**;

СССР Сывлăх Халăх Комиссариачĕн суд медицинин наукăпа тĕпчев институчĕн судпа хими уйрăмĕн аслă научнăй сотрудникĕ, доцент **М. Д. Швайкова**;

Ку ĕçе çаксем хутшăннипе:

Хĕвеланăç фронтри судпа медицинăн главнăй эксперчĕ, медицина службин майорĕ **Никольский**;

Н... çарăн судпа медицина эксперчĕ, медицина службин капитанĕ **Бусоедов**;

Патологипе анатоми 92-мĕш лабораторийĕн начальникĕ, медицина службин майорĕ **Субботин**;

Медицина службин майорĕ **Оглоблин**;

Врач-специалист, медицина службин аслă лейтенанчĕ **Садыков**;

Медицина службин аслă лейтенанчĕ **Пушкарева**;

1944 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче 23-мĕшĕ хушшинче тыткăнра пулнă поляксен виллисене, Катынь вăрманĕнчи «Козьи Горы» текен территорире, Смоленск хулинчен 15 километрти вырăнта пытарнăскерсене, шăтăксенчен кăларса, суд медицини енĕпе сăнаса тĕпчесе пăхрĕ. Польшăн тыткăнра пулнă çыннисен виллисене пĕр пысăк шăтăка—урлăшĕпе тăршшĕ 60-шар метра яхăн, тарăнăшĕ 3 метра яхăн шăтăка пытарнă, кунсăр пуçне, вĕсене тата тепĕр шăтăка—тăршшĕ 7 метра, сарлакăшĕ 6 метра яхăн, тарăнăшĕ 3 метр çурă яхăн шăтăка пытарнă. Çав шăтăксенчен 925 виле кăларнă, вĕсене çак енĕпе сăнаса тĕпченĕ:

а) мĕнле çынсем пулнине;

б) мĕнле сăлтавпа вилнине;

в) хăçан пытарнине.

Çак ĕçе тунин сăлтавĕ: Ятарласа тунă Комисси материалĕсене пăхăр.

Кун çинчен пĕлтерекен сведенисем: вилесене судпа медицина енĕпе сăнаса тĕпченĕ пирки çырнă протоколсене пăхăр.

Заключени

Вилесене судпа медицина енĕпе сăнаса тĕпчени результачĕсем тăрăх, судпа медицинăн эксперт комиссийĕ çакăн пек заключени тăвать.

Виле шăтăкĕсене уçсан тата вĕсенчи вилесене кăларса пăхсан, çакă палăрнă:

а) Польшăн тыткăнри çар çыннисен виллисем хушшинче гражданла тумтир тăхăннă çынсен виллисем те пур. Гражданла тумтирлĕ вилесем нумай мар (шăтăкран кăларнă 925 виле хушшинче—икĕ виле); вилесем çинче çар çыннисем тăхăнса çӳрекен ботинкăсем;

б) тыткăнри çар çыннисен виллисем çинчи тумтиртен вĕсем Польша çарĕн офицерĕсем тата пĕр пайĕ çав çарăн рядовой салтакĕсем пулни курăнать;

в) тумтирсене сăнаса пăхнă чухне кĕсъесене тата атăсене сăнаса тухнă, кĕсъесене çавăрса пăхнинчен тата вĕсене касниннчен, кашни виле çинчи тумтиртен (шинель, брюки тата ыттисем те) вĕсене вĕлернĕ хыççăн ухтарни курăнать;

г) хăшпĕр чухне тумтирсене сăнанă чухне кĕсъесене касса-сурмасăрах хăварни палăрнă. Çав кĕсъесенче те касса çурнă кĕсъесенче те, мундирсен шалти пирĕсенче, брюкисен пиçихисенче, портянкăсенче хăçатсен, кĕнекесен, кĕлĕ кĕнекисен, почта маркисен, открыткăсемпе çырусен, квитанцисен, запискăсен тата ытти документсен татăкĕсем пулнă; çавăн пекех вĕсенче хаклă йышши япаласем (ылтăн татки, ылтăн долларсем), чĕлĕмсем, хуçмалли çĕçĕсем, табак туртмалли хут, сăмса тутрисем тата ыттисем те пулнă;

д) документсен пĕр пайĕнче (вĕсене ятарласа сăнаса тĕпчемесĕрех), вĕсене пăхса тухнă чухне, çавсене 1940 çулхи ноябрĕн 12-мĕшĕпе 1941 çулхи июнĕн 20-мĕшĕ хушшинчи тапхăрта çырни паллă пулнă;

е) тумтирсен, уйрăмах шинельсен, мундирсен, брюкисен, çиелти кĕпесен пуставĕпе пирĕ лайăх сыхланса юлнă, вĕсене алăпа çурма та йывăр пулнă;

ж) вилесен пĕр пайĕн пĕчĕк пайĕн (925 вилерен 20 вилен) аллисене пĕрлештерсе çурăм хыçне шурă кантрапа çыхса лартнă.

Вилесем çинчи тумтирсем çапла: мундирсене, кĕпесене тӳмеленĕ, чĕн пиçиххисене çыхнă, брюкисемпе кальсонсене тӳмеленĕ: атă-пушмакĕсем урисенче; шарфсемпе галстуксене мăй тавра çыхнă, кĕпе-йĕм кантрисене çыхса лартнă, кĕпе аркисене брюки ăшне юсаса чикнĕ. Çаксенчен вилесене тулаш енчен тата вилĕсен алли-урисене маларах сăнаса пăхманни курăнать.

Судпа медицина эксперт комиссийĕ шăтăкран кăларса сăнаса тĕпченĕ вилесенчен çакă курăнать: пуç çинчи тирсем пĕтĕмпех сыхланса юлнă, вĕсем çинче, çавăн пекех кăкăрсемпе хырăмсен тирĕсем çинче суранасем тата касса пăхнисем çук (925 вилерен виçĕ вилен тирĕсем çинче çеç çавăн пек йĕрсем пур), сăнаса пăхнă чухне юлакан ытти паллăсем те çук. Çакăнтан -ку вилесене маларах, уннчен малтан, судпа медицина енĕпе сăнаса пăхманни курăнать.

925 вилен тулашĕсене те, ăшчиккисене те сăнаса пăхнинчен çакă курăнать: пуçсенче тата мăйсенче пăшал пулисем тивнипе пулнă суранасем пур, тăватă çынăн пуç шăммисене вăра мăка, çирĕп тата йывăр япалапа çапса шăтарнă. Кунсăр пуçне, хăшпĕр вилесен хырăмсем çинче суранасем пур, çав вăхăтрах вĕсен пуçĕсене те амантнă.

Пăшал пули кĕнипе пулнă шăтăксем пур вилесем çинче те темелле, пĕрер, хăшпĕр вилесем çинче çеç икшер шăтăк пур, çав шăтăксем вара ĕнсе çинче, ĕнсе çинчи пысăк айлăм патĕнче е унăн çывăхĕнче. Нумай вилесен ĕнсисем çинче пуля шăтăкĕсем пур, вĕсем мăй шăммин 1-мĕш, 2-мĕш тата 3-мĕш сыпăкĕсем таврашĕнче.

Пăшал пулисем ӳтрен тухса кайнă чухне пулнă шăтăксем пуриинчен ытларах вилесен çамкисенче тата вĕсен çамкисем таврашĕнче нумайрах, çавăн пек шăтăксем вилесен пуç тӳписенче, пуçăн аякри пайĕсенче, питсенче тата мăйсенче сахалтарах. 27 виле çинче пульăсем тухса кайнă чухне пулнă шăтăксем тупăнман, пуля кĕрсе кайнă шăтăкăн вĕçĕнче, пуç шăммин çемçе ӳтлĕ вырăнсенче, мимĕ таврашĕсенче пĕртте тĕттĕмленмен е кăшт çеç тĕттĕмленнĕ пульăсем тупнă, вĕсенчен нумайăшĕ автоматсенчен перекен 7,65 миллиметрлă калибрлă пульăсем.

Ĕнсе шăмми çинчи пуля кĕнипе пулнă шăтăксем мĕн пысăкăш пулнинчен çынсене вĕлернĕ чухне икĕ тĕрлĕ калибрлă пăшалсемпе пенĕ тесе вывод тума пулать: çав çынсене нумайăшне 8 миллиметртан пĕчĕкрех калибрлă, урăхла каласан, 7,65 миллиметр калибрлă пăшалпа, хăшпĕрисене 8 миллиметртан пысăкрах калибрлă, урăхла каласан, 9 миллиметр калибрлă пăшалпа персе вĕлернĕ.

Пуç шăммисенчи шăтăксем мĕнле пулнинчен тата хăшпĕр виле çинче пуля кĕнĕ шăтăк тĕлĕнче пăшал тарĕн юлашкисем пурринчен çав çынсене çывăхран пени курăнать.

Пуля кĕнĕ шăтăксемпе пуля тухса кайнă шăтăксем ăçта пулнинчен çынсене хыçалтан пени, çавăн чухне çынсене пуçĕсене малалла устарни курăнать. Пуля çын пурнăçĕшĕн пысăк вырăнта тăракан вырăнтан е вĕсен çывăхĕнчен шăтарса тухнă, çавăн чухне мимĕ суранланнине пула çынсем вилнĕ.

Пуçран мăка, хытă тата йывăр япалапа çапнăран шăмă çинче юлнă суранасем пур. Çавăн пек çапассипе пăшалпа перессине пĕр вăхăтрах тунă, ахальшĕн пуçран çапнипех çын вилме пултарайман.

1944 çулхи январĕн 16-мĕшĕне 23-мĕшĕ хушшинче судпа медицина енĕпе сăнаса тĕпченĕ вилесенчен çакă курăнать: çĕрсе кайма пуçланă вилесем е пĕтĕмпех çĕрсе кайнисем пачах çук; 925 вилерен пурте упраннă, вилесен сĕткенĕ типме тытăннă (çакă вилесен кăкăрĕсемпе хырăмĕсем таврашĕнче тата хăшпĕр чухне алли-урисем таврашĕнче хытă палăрнă: ӳтри çу хытма пуçланă, уйрăмах виле шăтăкĕсен тĕпĕнчен кăларнă вилесен çăвĕсем хытă сăрхăнса тухса хытма тытăнни курăннă); вилесен ӳчĕсем типесси тата вĕсенчи çусем хытса ларасси пĕр вăхăтра пулса пынă.

Çакăн çине уйрăмах пăхас пулать: вилесене касса тĕрĕслесе пăхнă чухне кĕлеткери тата алă-урасенчи шăнăрсем нимĕн те пăсăлманни тата вĕсен яланхи тĕсĕ мĕнле пулнă çаплипех юлни палăрнă: кăкăрпа хырăм таврашĕнчи шалти органсем нимĕн те пăсăлман; чылай вилесен чĕре тымарĕсенче нимĕнле улшăну та пулман, вĕсен тĕсĕсем те çаплипех юлнă; пуç мимисенчи шурă тата кăвак тĕслĕ вырăнсем çаплипех юлнă, вĕсем улшăнман. Ӳтсемпе органсене касса пăхса тĕрĕсленисĕр пуçне, судпа медицина экспертизи ку тĕлĕшпе малашне лаборатори условийĕсенче касса тĕрĕслеме тата хими енĕпе тĕрĕслеме тивĕçлĕ материалсем пухнă.

Вилесен ӳчĕсемпе органĕсем çĕрсе пăсăлмасăр упранса юлассине вĕсене тупнă вырăнта мĕнле тăпра пулнинчен чылай килнĕ.

Шăтăксене уçсан тата вилесене шăтăкран кăларсан, 1943 çулхи çуркуннехипе çуллахи ăшă тата нӳрлĕ вăхăтра вĕсем уçă сывлăшра выртнă. Çавна пула вилесем хăвăрт çĕрсе пăсăлма пултарнă.

Анчах вилесем мĕн чухлĕ типпинчен тата вĕсенчи çу мĕн чухлĕ хытнинчен, уйрăмах шăнăрсемпе шалти органсем лайăх упранса юлнинчен тата тумтирсем лайăх сыхланса юлнинчен вилесем çĕр айĕнче нумай выртман тесе шутлама пулать.

«Козьи Горы» территорийĕнчи вилтăприсенчи вилесене—Смоленск хулинче тата унăн çывăхĕнчи—Гедеоновка, Магаленщина, Реадовка, 126-мĕш лагерь, Красный бор патĕнчи вырăнсене тата ытти çĕре пытарнă вилесемпе танлаштарса пăхсан (судпа медицина экспертизин 1943 çулхи октябрĕн 22-мĕшĕнчи актне пăхăр) çакна йышăнмалла: тыткăна лекнĕ поляксен виллисене «Козьи Горы» территорине пытарнăранпа икĕ çула яхăн çитет. Çакна вилесен тумтирĕсенче тупнă документсем те пĕтĕмпех çирĕплетсе кăтартаççĕ, çав вилесене унтан маларах пытарма пултарайман (36-мĕш статьян «д» пункчĕне тата документсен описьне пăхăр).

Судпа медицина эксперт комиссийĕ сăнаса тĕпчесе пухнă сведенисемпе результатсем тăрăх—

Польша çарĕн тыткăна лекнĕ офицерĕсене тата вĕсем хушшинчи рядовойсене персе вĕлерни пĕтĕмпех палăрчĕ тесе шутлать;

вĕсене персе вĕлернĕренпе икĕ çула яхăн çитнине, урăхла каласан вĕсене 1941 çулхи сентябрьпе декабрь уйăхĕсем хушшинче персе вĕлернине палăртать;

судпа медицина эксперт комиссийĕ вилесен тумтирĕсенче хаклă япаласем тата 1941 çулхи çуллахи вăхăтпа паллă тунă документсем тупнă фактран çакă пĕтĕмпех палăрнă тесе шутлать: нимĕçсен фашистла влаçĕсем 1943 çулхи çуркуннепе çуллахи вăхăтра вилесене ухтарма тытăнса çавна тĕплĕн туса çитермен, вилесем çумĕнче тупнă документсенчен вара вĕсене 1941 çулхи июнь уйăхĕнчен каярахпа персе вĕлерни курăнать;

нимĕçсем Польшăн тыткăна лекнĕ çар çыннисен, персе вĕлернĕ çынсен виллисен пĕр пĕчĕк пайне кăна шăтăкран кăларса сăнаса тĕпченине палăртать;

Польшăн тыткăнри çар çыннисене персе вĕлерессине нимĕçсен фашистла влаçĕсем Совет Союзĕн мирлĕ гражданĕсемпе тыткăна лекнĕ совет воинĕсене персе вĕлерессине мĕнле мелсемпе пĕтерсе тăкнине, çавсене ССР Союзĕн вăхăтлăха оккупациленĕ территорийĕсенче, çав шутра Смоленск, Орел, Харьков, Краснодар, Воронеж хулисенче мĕнле меслетпе анлă туса пынă, Польшăн тыткăнри çар çыннисене те пĕтĕмпех çав меслетпе персе вĕлернине палăртать.

СССР Сывлăх Халăх Комиссариачĕн судпа медицинăн главнăй эксперчĕ, СССР Сывлăх Халăх Комиссариачĕн государствăн суд медицинин наукăпа тĕпчев институчĕн директорĕ В. И. ПРОЗОРОВСКИЙ.

Мускаври государствăн 2-мĕш медицина институчĕн профессорĕ, медицина наукисен докторĕ В. М. СМОЛЯНИНОВ.

Патологи анатомийĕн профессорĕ, медицина наукисен докторĕ Д. Н. ВЫРОПАЕВ.

СССР Сывлăх Халăх Комиссариачĕн государствăн суд медицинин наукăпа тĕпчев институчĕн танатологи уйрăмĕн аслă научнăй сотрудникĕ, доктор П. С. СЕМЕНОВСКИЙ.

СССР Сывлăх Халăх Комиссариачĕн государствăн суд медицинин наукăпа тĕпчев институчĕн судпа хими уйрăмĕн аслă научнăй сотрудникĕ, доцент М. Д. ШВЕЙКОВА.

Смоленск. 1944 çулхи январĕн 24-мĕшĕ.

Вилесем çумĕнче тупнă документсем

Судпа медицина экспертизин актĕнче çырса хунă сведенисемсĕр пуçне, нимĕçсем Польшăн тыткăна лекнĕ офицерĕсене хăçан персе вĕлернине (вĕсене нимĕçсем каланă пек 1940 çулта мар, 1941 çулхи кĕркунне персе вĕлернине) виле шăтăкĕсене чавса пăхнă чухне тупнă документсем те кăтартса параççĕ, çав документсене 1940 çулăн иккĕмĕш çур çулĕнче мар, 1941 çулхи çуркуннехипе çуллахи вăхăтра (мартпа июнь уйăхĕсем хушшинче) çырнă.

Судпа медицина эксперчĕсем тупнă документсенчен çаксем уйрăмах тимлĕ пăхма тивĕçлĕ документсем пулса тăраççĕ:

1. **92-мĕш номерлĕ виле çумĕнче:**

Варшавăран Тыткăнри çар çыннисен Центральнăй бюровĕн Хĕрлĕ Хĕресне—Мускав, Куйбышев урамĕ, 12-мĕш çурт—янă çыру. Ку çырăва вырăсла çырнă. Унта Софья **Зигонь** упăшки Томаш **Зигонь** ăçта пуранни çинчен пĕлтерме ыйтать. Ку çырăва **1940 çулхи сентябрĕн 12-мĕшĕнче** çырнине палăртнă. Конверт çинче нимĕçсен почта штампĕ—«Варшава. IX—40» тата «Москва, почтамт, 9 экспедиция. 28. IX—40 года» тесе çырнă штамп пур. Çыру çине хĕрлĕ чернилпа вырăсла резолюци хунă: «Уч. установить лагерь и направить для вручения 15.XI—40 г.», тенĕ (кам алă пуснине пĕлсе илме çук).

2. **4-мĕш номерлĕ виле çумĕнче.**

Почта открытки, заказной йĕркепе—0112-мĕш номер лартса, Тарнопольрен янă, ун çинче «Тарнополь **12.XI—40 г.**» тесе çырнă штамп пур.

Алçырăвĕ тата адресĕ начар палăракан пулнă.

3. **101-мĕш номерлĕ виле çумĕнче:**

Козельти лагерь Эдуард Адамович **Левандовскирен** ылтăн сехет илни çинчен 1939 çулхи декабрĕн 19-мĕшĕнче панă 10.293 номерлĕ квитанци. Квитанци тепĕр енче çав сехете Ювилерторга сутни çинчен **1941 çулхи мартăн 14-мĕшĕнче** çырни пур.

4. **46-мĕш номерлĕ виле çумĕнче:**

Старобельскри лагерь Владимир Рудольфович **Арашкевичран** ылтăн сехет илни çинчен 1939 çулхи декабрĕн 16-мĕшĕнче панă квитанци (номерне пĕлсе илме çук). Квитанци тепĕр енче çав сехете Ювилерторга сутни çинчен паллă туса **1941 çулхи мартăн 25-мĕшĕнче** çырни пур.

5. **71-мĕш номерлĕ виле çумĕнче:**

Христос сăнĕ ӳкернĕ, хутран тунă пĕчĕк турăшĕ пулнă, ăна католиксен кĕлĕ кĕнекин 144-мĕшпе 145-мĕш страницисем хушшинче тупнă.

Турăшăн тепĕр енне «Ядвиня. **4 апреля 1941 г.**» тесе çырнă. Çырни лайăххах палăрать.

6. **46-мĕш номерлĕ виле çумĕнче:**

1-мĕш ОН лагерь Арашкевичран 225 тенкĕ укçа илни çинчен **1941 çулхи апрелĕн 6-мĕшĕнче** панă квитанци.

7. **Çав 46-мĕш номерлĕ виле çумĕнчех:**

1-мĕш ОН лагерь Арашкевичран 102 тенкĕ илни çинчен **1941 çулхи майăн 5-мĕшĕнче** панă квитанци.

8. **101-мĕш номерлĕ виле çумĕнче:**

1-мĕш ОН лагерь **Э. Левандовскирен** 175 тенкĕ илни çинчен **1941 çулхи майăн 18-мĕшĕнче** панă квитанци.

9. **53-мĕш номерлĕ виле çумĕнче:**

Польша чĕлхипе çырнă почта открытки, ăна почтăпа яман. Ун çинчи адрес çапла: Варшава, Багатели 15, кв 47 Ирене **Кучинской**. Ун çинче **1941 çулхи июнĕн 20-мĕшĕ** тесе паллă тунă. Открыткăна ярақанĕ Станислав **Кучинский**.

Пĕтĕмĕшле выводсем

Ятарласа тунă Комисси аллинчи мĕн пур материалсенчен, уйрăммăн илсе кăтартсан—тĕпчесе ыйтса пĕлнĕ 100 ытла свидетель каласа панинчен, судпа медицина экспертизин сведенийĕсенчен, Катынь вăрманĕнчи виле шăтăкĕсенчен кăларнă документсемпе япаласенчен çакăн пек выводсем усăнах туxса тăраççĕ:

1. Польшăн тыткăна лекнĕ çар çыннисем, Смоленскран хĕвеланăçнерехри виçĕ лагерьте пулнăскерсем, вăрçă пуçланиччен çул-йĕр тунă çĕрте ĕçлекенскерсем, нимĕç оккупанчĕсем Смоленска пырса кĕнĕ хыççăн та, 1941 çулхи сентябрь уйăхĕччченех, унта пурăннă;

2. Катынь вăрманĕнче 1941 çулхи кĕркунне нимĕçсен оккупаци влаçĕсем çав лагерьсенчи тыткăнри поляксене массăллăн пере-пере вĕлернĕ;

3. Польшăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене Катынь вăрманĕнче нимĕçсен çар учрежденийĕ, «537-мĕш строительнăй батальонăн штабĕ» тенĕ ятпа пытанса ĕçленĕскер, пере-пере вĕлернĕ, çав учреждени пуçĕнче **Арнес** оберст-лейтенант тата унăн сотрудникĕсем—**Рекс** обер-лейтенантпа **Хотт** лейтенант тăнă;

4. 1943 çул пуçланнă тĕле вăрçăра Германишĕн лару-тăру йывăрланнă пирки нимĕçсен оккупаци влаçĕсем, провокаци тăвас шутпа, хăйсем тунă тискер ĕçсене Совет влаçĕн органĕсем тунă пек кăтартма хăтланнă, çапла майпа вĕсем вырăссене поляксемпе хирĕçтерсе яма шутланă;

5. Çав шутпа:

а) нимĕçсен фашистла захватчикĕсем йăпатса, укçа парса хăйсем майлă çавăрма хăтланса, хăратса тата тискеррĕн асаплантарса, совет гражданĕсем хушшинчен «свидетельсем» тупма тăрăшнă, çав çынсене Польшăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене Совет влаçĕн органĕсем 1940 çулхи çуркунне персе вĕлернĕ тесе суйса калаттарма тăрăшнă;

б) нимĕçсен оккупаци влаçĕсем 1943 çулхи çуркунне хăйсем персе вĕлернĕ поляксен виллисене ытти вырăнсенчен çавăнта иле-иле пынă, Катынь вăрманĕнчи виле шăтăкĕсене тепĕр хут чавса, вилесене çав шăтăксене пăрахнă, çавна вĕсем хăйсен тискер ĕçĕсен йĕрĕсене пытарас шутпа тата Катынь вăрманĕнче «большевиксен тискер ĕçĕсен» хисеппе ӳстерме хăтланса тунă;

в) провокаци тума хатĕрленсе, нимĕçсен оккупаци влаçĕсем Катынь вăрманĕнчи вилтăприсене тепĕр хут чавас тата виле шăтăкĕсенчен хăйсене хирĕç калакан документсемпе япаласене пухса илес ĕçре вырăссен тыткăна лекнĕ çар çыннисемпе усă курнă, çав çынсене вара, хушнă ĕçе туса пĕтерсенех, персе вĕлернĕ.

6. Судпа медицина экспертизин сведенийĕсем çакна кăтартса параççĕ:

а) Польшăн тыткăнри çар çыннисене 1941 çулхи кĕркунне персе вĕлернĕ;

б) нимĕç палачĕсем Польшăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене ĕнсисенчен пистолетпа персе вĕлернĕ, çав майпа вĕсем совет гражданĕсене ытти хуласенче сăмахран, Орĕлра, Воронежра, Краснодарта тата çав Смоленскрах, массăллăн пере-пере вĕлернĕ.

7. Нимĕçсем Польшăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене 1941 çулхи кĕркунне вĕлерни çинчен свидетельсем тата судпа медицина экспертизин сведенийĕсем тĕрĕссине Катыньри вилтăприсенчен кăларнă япаласемпе документсем лайăх кăтартса параççĕ;

8. Польшăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене Катынь вăрманĕнче пере-пере вĕлерсе, нимĕçсен фашистла захватчикĕсем славян халăхĕсене вĕлерсе пĕтерес политикăна çине тăрса пурнăçласа пынă.

Ятарласа тунă Комиссин председателĕ, Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси членĕ, академик Н. Н. БУРДЕНКО.

ЧЛЕНĔСЕМ: Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси членĕ академик Алексей ТОЛСТОЙ.

Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси членĕ Митрополит НИКОЛАЙ.

Пĕтĕм тĕнчери славянсен Комитечĕн председателĕ генерал-лейтенант А. С. ГУНДОРОВ.

«Хĕрлĕ Хĕрес» тата «Хĕрлĕ Çуруйăх» Обществисен Союзĕн исполком председателĕ С. А. КОЛЕСНИКОВ.

РСФСР Çутĕç Халăх Комиссарĕ, академик В. П. ПОТЕМКИН.

Хĕрлĕ Çарăн Санитари Тĕп Управленийĕн начальникĕ, генерал-полковник Е. И. СМИРНОВ.

Смоленск облисполкомĕн председателĕ Р. Е. МЕЛЬНИКОВ.

Смоленск хули. 1944 çулхи январĕн 24-мĕшĕ.

(«Правда» хаçатра 1944 çулхи январĕн 26-мĕшĕнче пичетленнĕ).

Греци демократсем И. В. Сталин юлташ патне янӑ ҫыру

НЬЮ-ЙОРК, мартӑн 3-мӗшӗ. (ТАСС). ССР Союзӗн ООН-ри яланхи представителӗн ӗҫӗсене туса пыракан С. К. Царапкин Генеральнӑй Ассамблейӑн улттӑмӗш сессийӗн председателӗ Падилья Нерво патне ҫыру янӑ. Унта ҫапла каланӑ:

«Господин председатель ҫакӑнпа пӗрле сирӗн пата И. В. Сталин ячӗпе илнӗ телеграммӑсене ярса паратӑп, ҫав телеграммӑсене Грецин вӗлермелле тунӑ патриочӗсем Никос Белоянниспа Элли Иоаниду тата вӗсен тӑванӗсем янӑ:

«Сталин Генералиссимуса.

Шпионла ӗҫсем тунӑ тесе суйса айӑпласа, Королӗн Афинӑри ҫар трибуналӗн комиссарӗ ҫакӑнта айлараххра алӑ пуснӑ ҫынсене: Никос Белояннисa, Элли Иоанидӑна, Лазаридиуса тата ыттисене те вӗлермелле тума приговор йышӑнма требовани лартрӗ.

Сирӗн пата, пӗтӗм тӗнчери миршӗн хастарлӑ кӗрешекен ҫын патне ҫыру ярса, эпир ҫапла калатпӑр: ҫӗнӗ вӑрҫӑ чӗртме хӗтӗртекенсем ҫынсене вӗлермелле туса приговорсем йышӑннипе пирӗн нумай асап курнӑ ҫӗршывра тепӗр хут пӗр-пӗрне курайманлӑха чӗртме тата Греци халӑхӗпе ытти халӑхсем миршӗн, демократишӗн тата ирӗклӗ пурнӑҫшӑн тӑрӑшнине пирӗн юн ӑшӗнче путарса лартма шутлаҫҫӗ. Ҫӗнӗрен преступлениллӗ ӗҫ тума хатӗрленеҫҫӗ, сирӗнтен ҫав преступление тӑвассине сирсе ямашкӑн ку ӗҫе хутшӑнма ыйтатпӑр.

Никос Белояннис, Элли Иоаниду».

«Сталин Генералиссимуса.

Королӗн Афинӑри ҫар трибуналӗн комиссарӗ пирӗн ачасене Никос Белояннисa, Элли Иоанидӑна тата суд умне тӑратнӑ тепӗр вунӑ ҫынна вӗлермелле туса приговор йышӑнма требовани лартнӑ. Приговора пӗр тӑхтаса тӑмасӑрах пурнӑҫа кӗртес хӑрушлӑх пур. Ҫавӑн пек хӑрушлӑх пурри ҫинчен калакан сӑлтавсем ҫапла: вӗлермелле туса приговор йышӑннӑ хыҫҫӑн ӑна пурнӑҫа кӗртессине сирсе яма законлӑ сӑлтавсем пулмаҫҫӗ, кунта политикӑллӑ шухӑш-кӑмӑлшӑн айӑпласа пӗрремӗш хут виҫӗ уйӑх каялла вӗлермелле туса приговор йышӑннӑ гражданӑсем пирки сӑмах пырать, ҫав граждансене 1950 ҫултанпа асфалире (охранка тӗрминче.—Ред.) хупса усраҫҫӗ, пирӗн ҫӗршыври лару-тӑру чӑннипе вӑрҫӑ чухнехи пекех. Король комиссарӗ вӗлермелле туса приговор йышӑнма требовани лартнӑ ҫынсем хушшинче пӗчӗк ачана кӑкӑр сӗчӗпе тӑрантарса усракан ача амӑшӗ пуррине тата пирӗн нумай асап курнӑ тӑван ҫӗршыв текех юн юхтарасшӑн мар пулнине, пирӗн ҫӗршыв лӑпкӑ пурнӑҫ, лӑпланса пурӑнмалли пурнӑҫ тӑвасшӑн пулнине шута илсе, эпир ҫав вуникӗ ҫын ячӗпе Сирӗнтен, Эсир этемле ырӑ шухӑш-туйӑмлӑ пулнине асра тытса, пулӑшу ыйтатпӑр. Ырӑ кӑмӑллӑ ӗҫ тумалли таса закона пурнӑҫламалла тесе шутласа, эпир Сирӗнтен, хӑвӑр влиянипе усӑ курса, пирӗн правительствӑна вӑл ҫав ҫынсене персе вӗлерессине чарса лартмалла тутӑр тесе тӑрӑшма ӳкӗтлетпӗр.

Сире чунтан-чӗререн хисеплесе
Василики Белоянни, Иро Паппа».

Ҫӳлте ҫырнисене шута илсе, Сирӗнтен, господин председатель, Грецин ҫак патриочӗсен пурнӑҫне ҫӑлса хӑварма Пӗрлешнӗ нацисен организацийӗ урлӑ васкавлӑ мерӑсем йышӑнма, ҫак ҫырӑва Генеральнӑй Ассамблея документчӗ шутласа, ӑна ООН членӗсем пулса тӑракан ҫӗршывсен правительствисене ярса пама ыйтатӑп.

Сире хисеплесе **С. К. ЦАРАПКИН**».

Грецин суд вӗлермелле тунӑ патриочӗсен тӑванӗсемпе политикӑллӑ ӗҫсемшӗн тӗрмере ларакансем И. В. Сталин юлташ патне янӑ ҫырусем

НЬЮ-ЙОРК, мартӑн 4-мӗшӗ. (ТАСС). Мартӑн 3-мӗшӗнче ССР Союзӗн ООН-ри яланхи представителӗн ӗҫӗсене туса пыракан С. К. Царапкин ООН Генеральнӑй Ассамблейин улттӑмӗш сессийӗн председателӗ Падилья Нерво патне ҫакӑн пек ҫыру янӑ:

«Господин председатель, Грецин суд вӗлермелле тунӑ патриочӗсен тӑванӗсемпе тата политикӑллӑ ӗҫсемшӗн Авероф тӗрминче ларакансенчен Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Министрӗсен Совечӗн председателӗ И. В. Сталин ячӗпе ҫакӑн пек телеграммӑсем илнӗ:

«Сталин Генералиссимуса.

Манӑн пӗртен-пӗр ывӑлӑма вӗлерме приговор йышӑннӑ, ӑна вӗлерес хӑрушлӑх сехетрен сехете ҫывхарса пырать, ӑна хӑйӗн политикӑллӑ шухӑш-ӗмӗчӗсемшӗн вӗлермелле тунӑ. Ӑна вӗлерес хӑрушлӑх хӑвӑрт ҫывхарнӑ пирки чӗре ыратса хытсах каять. Хамӑн чӗре хытӑ ыратнӑ чухне эпӗ Сирӗнтен пулӑшу илессине шанатӑп. Вӗлермелле туса йышӑннӑ приговорсене пурнӑҫлакан отрядсене Эсир тата мӗнпур прогрессивнӑй ҫынсем кӑна тытса чарма пултараҫҫӗ. Пирӗн ҫӗршывра ҫӗнӗрен юн юхассине чарса лартӑр. Пирӗн ачасене вилӗмрен ҫӑлса хӑварӑр.

Василики Белоянни».

«Сталин Генералиссимуса

Политикӑллӑ ӗҫсемшӗн хупнисен тата ссылкӑна янисен ҫемйисен Пӗтӗм Грецири пӗрлешӗвӗн комитечӗ ячӗпе политикӑллӑ ӗҫсемшӗн тытса хупнисене ҫаплах инкек тата асап кӑтартнине хирӗҫ протестлетпӗр. Тытса хупнӑ ҫынсене, туберкулезпа чирленисене, пӗр тӗрмерен тепӗр тӗрмене турттарса ҫӳренине хирӗҫ, ҫӗнӗрен айӑпламалли ӗҫ пуҫарса суд тӑвассине хирӗҫ, шпионла ӗҫ тунӑ тесе суйса айӑпланипе ҫынсене персе вӗлерме палӑртнине хирӗҫ протестлетпӗр. Текех юн юхтармалла мар. Хӑйсен ачисене вӗлерӗ е тытса хупнӑ пирки хурланса пурӑнакан амӑшӗсем ҫителӗклӗ ӗнтӗ. Текех куҫҫулӗ юхтарни пулмалла мар. Пирӗ пулӑшу пама тата пирӗн ҫӗршывра лӑпкӑ пурнӑҫ тума пулӑшмашкӑн ыйтатпӑр. Пӗтӗмӗшле амнисти пама ыйтатпӑр.

Глезу, Муратиду, Адамопулу, Триккали, Потамиану, Провеленгу».

«Сталин Генералиссимуса

Авероф тӗрминче ларакан мӗнпур ҫынсем ячӗпе правительство халӑх геройне Белояннисӑна тата унӑн юлташӗсене персе вӗлерме шутланине хирӗҫ протестлетпӗр. Правительство халӑх борецӗн Белояннисӑн ятне варалама, ун ҫинчен вӑл шпионла ӗҫсем тунӑ тесе алеклеме шутланине хирӗҫ протестлетпӗр. Правительствӑн пӗртен-пӗр тӗллевӗ—ҫӗнӗрен ҫынсене персе вӗлерме самана пуҫарасси пулать. Халӑхӑн тӳрӗ кӑмӑллӑ борецӗсен тӗлӗшпе преступлени ӗҫ тума хатӗрленеҫҫӗ. Сирӗнтен, демократиллӗ этемлӗхрен, халӑхӑн тӳрӗ кӑмӑллӑ борецӗсене вӗлересрен ҫӑлса хӑварма ыйтатпӑр.

Матфеос Цимбукидис—депутат пулнӑскер, Тасос Хойногло—журналист».

Ҫӳлте асӑннӑ телеграммӑсенчен ҫакӑ курӑнать: Грецин делегачӗ Генеральнӑй Ассамблейӑн улттӑмӗш сессийӗн Специальнӑй политика комитетӗнче 1951 ҫулхи ноябрӗн 20-мӗшӗпе 23-мӗшӗнче Грецин ҫак телеграммӑсенче асӑннӑ патриочӗсене вӗлерес хӑрушлӑх ҫук, Греци правительстви судпа айӑпланисене каҫарас пирки йышӑннӑ мерӑсем тӑрӑх вӗсене ҫӑмӑллӑх пароҫҫӗ тесе каланӑ пулсан, вӑл ҫапла майпа Пӗрлешнӗ Нацисен организацийӗпе тӗнчери общественноҫа улталама хӑтланнӑ. Ҫак телеграммӑсенчен тата акӑ мӗн курӑнать: Грецин ҫӳлте асӑннӑ патриочӗсен пурнӑҫӗ пысӑк хӑрушлӑхра, вӗсене вӗлермелле туса йышӑннӑ приговорсене пурнӑҫа кӗртес хӑрушлӑх пур.

Ҫӳлте ҫырнисене шута илсе, Сирӗнтен, господин председатель, Генеральнӑй Ассамблейӑн виҫҫӗмӗшпе тӑваттӑмӗш сессийӗсем Грецири политикӑллӑ ӗҫсемшӗн айӑпланине кура асап тӳсекен ҫынсене хӳтӗлемелле, вӗсем ҫине этемле пӑхмалла тесе йышӑннине килӗшӳллӗн, Грецин ҫав патриочӗсене вӗлересрен ҫӑлса хӑварма Пӗрлешнӗ нацисен организацийӗ урлӑ васкавлӑ мерӑсем йышӑнма ыйтатӑп.

Сирӗнтен ҫак ҫырӑва Генеральнӑй Ассамблея документчӗ вырӑнне шутласа пичетлесе кӑларма, ӑна ООН членӗнче тӑракан мӗнпур ҫӗршывсен правительствисене ярса пама ыйтатӑп. Сире хисеплесе С. К. Царапкин».

Ҫакӑн пек ҫырӑва С. К. Царапкин ООН секретариатне те ярса панӑ.

ИНДИ ПАРЛАМЕНЧӖН ХАЛӐХ ПАЛАТИНЕ СУЙЛАНИН ИТОГӖСЕМ

ДЕЛИ, мартӑн 3-мӗшӗ. (ТАСС). Инди парламенчӗн Халӑх палатине (кӗҫӗн палатӑна) депутатсем суйланин пӗтӗм итогне пичетлесе кӑларнӑ.

Халӑх палатинче пӗтӗмпе 497 депутат. Вӗсенчен 489 депутата парламент суйлавӗ вӑхӑтӗнче суйланӑ, 8 депутата Инди президенчӗ хӑй уйӑрса лартать.

Суйлав итогӗсенчен сулахайри партисен пӗрлешнӗ фрончӗ, Индири коммунистсен партийӗ ертсе пыраканскер, суйлавра чылай пысӑк ҫитӗнӳ туни курӑнать. Сулахайри партисен пӗрлешнӗ фрончӗ Халӑх палатинче 27 вырӑн илнӗ, депутатсен хисепӗ енӗпе вӑл парламентри мӗнпур партисем хушшинче иккӗмӗш вырӑн йышӑннӑ. Сулахайри партисен пӗрлешнӗ фрончӗ ҫав ҫитӗнӗве ӑна хытӑ хӗсӗрленӗ условисенче, суйлав вӑхӑтӗнче унӑн кандидачӗсене хытӑ хӗсӗрленӗ условисенче, тума пултарнӑ Халӑх палатинчи вырӑнсен пысӑк пайне (383 вырӑн) Индири влаҫра тӑракан парти — Индин наци конгресӗ текенскер йышӑннӑ. Ку парти пур суйлав округӗсенче те хӑйӗн кандидачӗсене тӑратнӑ. Наци конгресӗ партийӗн кандидачӗсем 126 суйлав округӗнче поражени тӳснӗ, ҫакӑнтан ку партие Инди халӑхӗ сахалтарах хисеплеме пуҫлани курӑнать.

Суйлавра Индири социалистсен партийӗ пӗтӗмпех поражени тӳснӗ. Ҫав партин руководителӗсем тахҫанах ӗнтӗ Америка империализмӗн агенчӗсем пулса тӑнӑ. Ку парти Халӑх палатине суйлама 255 кандидат тӑратнӑ. вӗсенчен 12 ҫынна ҫеҫ депутат пулма суйланӑ.

«Праджа парти» текенскер, нумай пулмасть Индин наци конгресӗ партийӗнчен уйрӑлнӑскер, 137 кандидат тӑратнӑ пулнӑ, вӑл Халӑх палатинче 10 вырӑн илнӗ. Парламентра хӑйсен представителӗсем пур тепӗр 17 парти Халӑх палатинче пӗр вырӑнтан пуҫласа пилӗк вырӑн таран илнӗ. Никама пӑхӑнманнисенчен 36 депутат суйланнӑ.

Болгари халӑхӗ вырӑс халӑхне тулли кӑмӑлтан тав тӑвать

СОФИЯ, мартӑн 3-мӗшӗ. (ТАСС). Паян Болгари халӑхӗ аслӑ вырӑс халӑхне тулли кӑмӑлтан тав туса вырӑссен паттӑр ҫарӗ Болгарие Турцин ӗмӗртенхи пусмӑрӗнчен хӑтарнӑранпа 74 ҫул тултарнине уявлать. Ҫак чаплӑ уяв ячӗпе Отечественнӑй фронт, Болгарипе Совет Союзӗ обществисен союзӗ тата ытти обществӑллӑ организацисем чаплӑ пухусемпе вечерсем ирттереҫҫӗ, вырӑссен мухтава тивӗҫлӗ ҫарӗсем Болгари халӑхне ирӗке кӑларассишӗн мӗнле кӗрешнипе паллаштаракан выставкӑсем тӑваҫҫӗ.

Юлашки кунсенче халӑх ҫарӗн центральнӑй музейне курма ҫӳрекенсем нумайланнӑ, унта Болгари халӑхне ирӗке кӑларнӑ вырӑс ҫарӗн ҫапӑҫу хатӗрӗсем усранаҫҫӗ.

Болгари Наука академийӗн музыкӑна наука енӗпе тӗпчес тӗлӗшпе ӗҫлекен институчӗ ҫак уяв ячӗпе Болгари ҫыннисен ҫырӑвӗсен кӗнекине пичетлесе кӑларма хатӗрленӗ. Ҫав ҫырусенче Болгари халӑхӗ хӑйне Турцин йывӑр пусмӑрлӑхӗнчен хӑтарнӑ вырӑс халӑхӗпе вырӑс ҫарне чунтан-чӗререн юратса тав тӑвать.

Паян хаҫатсем «Болгари халӑхӗн ҫак чаплӑ уявне анлӑ палӑртаҫҫӗ.

«Работническо дело» хаҫат «Ӗмӗр-ӗмӗр тав туса пурӑнӑпӑр» ятлӑ умстатьяра ҫапла ҫырать:

Паян пирӗн халӑх хӑйне Турци пилӗк ӗмӗр хушши пусмӑрласа пурӑннинчен хӑтӑлнӑ куна уявлать. 74 ҫул каялла вырӑссен ҫӗнтерӳллӗ ҫарӗсем феодальнӑй стройлӑ Турцие Сан-Стефанора пире ирӗклӗхпе никама пӑхӑнманлӑх парассине йышӑнтарттарнӑ.

Турци пусмӑрӗнчен хӑтӑлнӑ куна уявласа, пирӗн халӑх аслӑ Совет Союзне чунтан-чӗререн тав тӑвать, пирӗн халӑхӑн чи лайӑх тусне, пирӗн халӑха хӳтӗлекен Иосиф Виссарионович Сталин юлташа чунтан-чӗререн, вӗҫӗмсӗр хытӑ хисеплесе тав тӑвать. Болгарири кашни тӳрӗ кӑмӑллӑ ҫын Совет Союзӗпе туслӑ ҫыхӑну тытнипе, Ленинпа Сталинӑн аслӑ вӗрентӗвне пурнӑҫланипе, Сталин юлташ тӑван атте пек тӑрӑшнипе кӑна пирӗн халӑх хӑй ирӗке тухнӑ куна уявлама пултарнине, тӗнчери иккӗмӗш вӑрҫӑ аркатса хӑварнӑ хуҫалӑха, халӑх хуҫалӑхне юсаса ҫитерме, социализм туса пыма пултарнине лайӑх ӑнланса илет.

Пирӗн халӑх хӑйӗн хальхи вӑхӑтри чаплӑ пурнӑҫне тата малашнехи телейлӗ пуласлӑхне ӗмӗрлӗхех совет ҫӗршывӗнчи халӑхсемпе тачӑ ҫыхӑнтарчӗ. Пирӗн халӑх аслӑ Совет Союзӗ ертсе пыракан лагерӗнче ҫирӗп тӑрать, унпа пӗрле пӗтӗм тӗнчери мире сыхласа хӑварассишӗн кӗрешет».

«Работническо дело» хаҫат юлашкинчен: Болгарипе Совет Союзӗ хушшинчи ҫирӗп туслӑх ӗмӗр-ӗмӗр пурӑнтӑр тата чечекленсе пытӑр, тесе ҫырать.

Вильгельм Пик Германи хӗрарӑмӗсем патне янӑ ҫыру

БЕРЛИН, мартӑн 5-мӗшӗ. (ТАСС). АДН агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Демократиллӗ Германи Республикин президенчӗ Вильгельм Пик Германири демократиллӗ хӗрарӑмсен союзӗн правленине ҫыру янӑ. Ҫав ҫырура вӑл Германири хӗрарӑмсене Пӗтӗм тӗнчери хӗрарӑмсен кунӗ ячӗпе тата Германири Демократиллӗ хӗрарӑмсен союзне туса хунӑранпа пилӗк ҫул тултарнӑ ятпа саламлать. Пик хӑйӗн ҫырӑвӗнче хӗрарӑмсем Демократиллӗ Германи Республикин политикӑллӑ, экономикӑллӑ тата культурӑллӑ пурнӑҫӗн пур облаҫӗсенче те активлӑ хутшӑнса ӗҫленине палӑртать.

Вильгельм Пик тата нимӗҫ хӗрарӑмӗсем вӑрҫа хатӗрленмелли «пӗтӗмӗшле договор» текенскерне хирӗҫ, ҫӗршывра пурӗ ҫар служби пулмалли закона шутланине хирӗҫ, Германие хӑвӑртрах пӗрлешӳ договор тӑвассишӗн активлӑ кӗрешни ҫинчен ҫырать.

Вильгельм Пик Демократиллӗ Германи Республикинчи хӗрарӑмсене хӑйсен Хӗвеланӑҫ Германири хӗрарӑмӗсемпе пӗрле Германи хӗвеланӑҫӗнчи пайӗнче ҫӗнӗрен хӗҫпӑшалланнине хирӗҫ кӗрешме чӗнет. Юлашкинчен ӗҫре «Малашнехи ӗҫре сирӗн Совет Союзӗнчи хӗрарӑмсенчен пример илмелле», тенӗ.

Кореӑри ӗҫсем

ХАЛӐХ ҪАРӖН ГЛАВНӐЙ КОМАНДОВАНИЙӖ ПӖЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, мартӑн 4-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн главнӑй командованийӗн паянхи пӗлтерӗвӗнче ҫапла каланӑ: Корея Халӑх ҫарӗн соединенийӗсем Китай халӑх добровольцӗсемпе пӗрле тӑшмана хирӗҫ оборонӑра тӑрса ҫапӑҫаҫҫӗ.

Хӗвелтухӑҫӗнчи ҫыран районӗнче Халӑх ҫарӗн чаҫӗсем тӑшманӑн пӗр [illegible] нерне шыва путарнӑ.

ПХЕНЬЯН, мартӑн 5-мӗшӗ. Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн главнӑй командованийӗ паян ҫапла пӗлтернӗ: Халӑх ҫарӗн соединенийӗсем Китай халӑх добровольцӗсен чаҫӗсемпе пӗрле тӑшмана хирӗҫ оборонӑра тӑрса ҫапӑҫаҫҫӗ.

Енер фронтсенче уйрӑмах паллӑ нимӗнле улшӑну та пулман.

Паян Халӑх ҫарӗн зенитнӑй чаҫӗсем тӑшманӑн виҫӗ истребительне персе ӳкернӗ.

Америка агрессорӗсем Кореӑра ҫапах бактериллӗ хӗҫпӑшалпа усӑ кураҫҫӗ

ПХЕНЬЯН, мартӑн 4-мӗшӗ. (ТАСС). Корея тӗп телеграф агентстви хӑйӗн хӗвелтухӑҫӗнчи фронтри спецкорӗн пӗлтерӗвве пичетлесе кӑларнӑ. Унта вӑл ҫапла ҫырать: Америка агрессорӗсем Корея Халӑх ҫарӗпе Китай халӑх добровольцӗсен Янгу хулинчен ҫурҫӗртерехри позицийӗсем ҫине тата хӗвелтухӑҫӗнчи ҫыран районӗсене ҫаплах самолетсемпе вӗҫсе пырса, хӑвӑрт саралакан чир-чӗрсен бактерийӗсене ертнӗ хурт-кӑпшанкӑсем пӑрахаҫҫӗ.

Ҫапла, февралӗн 26-мӗшӗнче Линчжо уесӗнчи, Сохва вулӑсӗнчи Манихонгон ялӗ патне интервентсем пилӗк вырӑнта бактерисем ертнӗ ҫунатлӑ кӑткӑсене пӑрахса хӑварнӑ. Хваян уесӗнчи, Ногымчан вулӑсӗнчи Сосунки ялӗ патне интервентсем чир-чӗр бактерийӗсем ертнӗ эрешменсене, Янгу уесӗнчи Суип вулӑсӗнчи пилӗк вырӑнта—бактериллӗ шӑнасене пӑрахнӑ.

Ҫав кунах Пхенчан хулинчен пӗр километр ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехри вырӑнта тата Кымхва хулинчен виҫӗ километр ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехри икӗ вырӑнта шӑнасем, пыйтӑсем тата эрешменсем нумай пурри палӑрнӑ.

Февралӗн 27-мӗшӗнче интервентсем Танчжон уесӗнчи Лимнам вулӑсенче улӑ вырӑна ҫунатлӑ кӑткӑсемпе пӑрҫасем пӑрахнӑ.

Ҫав кунах Алмаз сӑрчӗсем хушшинчи Тэчжонкол текен тарӑн варта тата Янгу уесӗнчи Суип вулӑсӗсенче интервентсем пӑрахса хӑварнӑ, бактерисем ертнӗ шӑнасемпе вӑрӑмтунасем пурри палӑрнӑ.

Бактери ертнӗ ҫав хурт-кӑпшанкӑсене пурне те самолетсем ҫинчен ҫӗрле, снаряд гильзисем ӑшне е тимӗр трубасем ӑшне чиктарса пӑрахса хӑварнӑ, кашни труба ӑшӗ 9—10 литр вырнаҫмаллӑх, тесе ҫырать корреспондент.

Саралакан чирсемпе кӗрешекен отрядсем бактериллӗ хурт-кӑпшанкӑсене пӗтерес тӗлӗшпе ӗҫлеҫҫӗ, тупнӑ хурт-кӑпшанкӑсене пӗтерсе пыраҫҫӗ.

Тунисри ӗҫсем

ПАРИЖ, мартӑн 3-мӗшӗ. (ТАСС). «Юманите» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Тунис хулинче ӗҫсыннисен ҫӗнӗ пысӑк демонстрацийӗ пулнӑ. Унта темиҫе ҫӗр ҫын хутшӑннӑ. Манифестантсем Францин генеральнӑй резиденчӗн ҫурчӗ патне кайма тухнӑ. Анчах вӗсене полицин пысӑк отрячӗсем ҫурт патне яман. Полицейскисем пӑшалсемпе пенӗ. Манифестантсем хушшинче аманнисем пур. Франс пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, полици чылай ҫынсене тытса хупнӑ.

«Либерасьон» хаҫат Франци полицийӗ тата ҫар чаҫӗсем Моктор районӗнче «шанчӑксӑр ҫынсенчен тасатас ӗҫе» туса ҫӳрени ҫинчен пӗлтерет. Тунисра Франци ҫар трибуналӗ ҫаплах Тунис патриочӗсене «пӑшал усранӑшӑн»—айӑпласа приговорсем йышӑнать.

«Юманите» хаҫат ӗнер Парижра Францире ӗҫлекен тата пурӑнакан Алжир, Тунис, тата Марокко ӗҫсыннийӗсен представителӗсен пухӑвӗ пулса иртни ҫинчен пӗлтерет. Пухӑва пынисем резолюци йышӑннӑ, унта вӗсем хӑйӗн нациллӗ никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн паттӑр кӗрешекен Тунис халӑхӗпе пӗр шухӑшлӑ пулни ҫинчен каланӑ.

ПАРИЖ, мартӑн 5-мӗшӗ. (ТАСС). Франци влаҫӗсем Тунис халӑхне хытӑ хӗсӗрлеҫҫӗ. Ҫапах та Тунис халӑхӗ Франци колонизаторӗсене хирӗҫ кӗрешет. «Се суар» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Тунис патриочӗсем Джебель-Абеод хулинче тата Сиди-бу-Али патӗнче Франци жандармӗсене пӑшалпа пенӗ. Халӑха хӗсӗрлесе ҫӳрекен ҫар чаҫӗсене куҫса ҫӳреме чарас шутпа Тунис ҫыннисем кӗперсене аркатаҫҫӗ, поездсене вут тивертеҫҫӗ, телеграфпа телефон ҫыхӑнӑвӗсене ҫӗмӗрсе стройран кӑлараҫҫӗ. Суспа-Кайруан хулисем хушшинчи чугун ҫулӗ ҫинче улӑ вагона вут тивертсе ҫунтарса янӑ. Сен-Жерменра (Тунис хули патӗнчи поселок) тата Сфакс патӗнче кӗперсене аркатнӑ. Ҫӗршыври тӗрлӗ районсенче телеграф юписене касса ӳкернӗ.

Франци ҫарӗсем юлашки вӑхӑтра Джебель-Абеод районӗнче халӑха хӗсӗрлесе ҫӳренӗ, ҫавӑн чухне Тунис ҫыннисенчен чылайӑшне тытса хупнӑ.

Республикӑри ӗҫсыннисем мартӑн 8-мӗшне уявлама хатӗрленеҫҫӗ

Республикӑри ӗҫсыннисем Пӗтӗм тӗнчери хӗрарӑмсен кунне—Мартӑн 8-мӗшне чыслӑн паллӑ тума хатӗрленеҫҫӗ. Ҫак кун ячӗпе учрежденисемпе предприятисенче, колхозсенче ӗҫсыннисен савӑнӑҫлӑ пухӑвӗсем пулса иртеҫҫӗ. Ҫав пухусенче Пӗтӗм тӗнчери ӗҫ хӗрарӑмӗсем мирпе демократишӗн, ҫӗнӗ вӑрҫӑ хӑрушлӑхне хирӗҫ, Америкӑпа Англи империалисчӗсем пуҫарса яма ӗмӗтленекен вӑрҫа хирӗҫ кӗрешни, совет хӗрарӑмӗсем хӑйсен Тӑван ҫӗршывӗн вӑй-хӑватне ӳстерессишӗн ырми-канми ӗҫлени ҫинчен докладсемпе калаҫусем ирттереҫҫӗ, лайӑх ӗҫлекен хӗрарӑмсене паллӑ тӑваҫҫӗ.

Шупашкарти Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденлӗ заводра, чӑлха фабрикинче, пир-авӑр комбиначӗн строительствинче, Ленин ячӗпе тӑракан фабрикӑра тата ытти предприятисенче те цехсемпе участокӗсенче агитаторсем ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ Пӗтӗм тӗнчери хӗрарӑмсен кунӗ—Мартӑн 8-мӗшӗ ҫинчен йышӑннӑ постановлени тӑрӑх калаҫусем ирттереҫҫӗ.

Максим Горький ячӗпе тӑракан Центральнӑй библиотекӑра, ВКП(б) хула комитечӗн парткабинетӗнче совет хӗрарӑмӗсен мирлӗ ӗҫре чаплӑ ӳсӗмсем тунине кӑтартакан произведенисен выставки, фотоӳкерчӗксен витринисем тунӑ. Мартӑн 8-мӗшӗнче библиотекӑра вулакансен пухӑвӗ, Пӗтӗм тӗнчери хӗрарӑмсен кунӗ ҫинчен доклад пулать. Хулари культурӑпа ҫутӗҫ учрежденийӗсенче хӗрарӑмсен кунӗ ячӗпе спектакльсем, ятарласа хатӗрленӗ программа тӑрӑх концертсем пулаҫҫӗ.

* * *

Шупашкарти пир-авӑр фабрикинче ӗҫлекен рабочисемпе работницӑсем Пӗтӗм тӗнчери хӗрарӑмсен кунне — мартӑн 8-мӗшне производствӑра пысӑк ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илеҫҫӗ. СССР Верховнӑй Совечӗн сессийӗ умӗн социализмлӑ ӑмӑртӑва вӑйлатса фабрика февраль уйӑхӗнчи производство планне чылай ирттерсе тултарчӗ. Фабрика Тӑван ҫӗршыва планран ирттерсе пиншер метр пир, ҫип нумай арласа пачӗ. Халӗ кунта кашни цехра, участокра агитаторсем ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ Пӗтӗм тӗнчери хӗрарӑмсен кунӗ ҫинчен йышӑннӑ постановлени тӑрӑх калаҫусем ирттереҫҫӗ.

— Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗ Совет Союзӗнчи ӗҫхӗрарӑмӗсене мартӑн 8-мӗшӗ ячӗпе саламлани, Тӑван ҫӗршывӑн вӑй-хӑватне тӗреклетессишӗн паттӑррӑн кӗрешме чӗнни пире тата лайӑхрах ӗҫлеме хавхалантарать,— теҫҫӗ работницӑсем. Халӗ кунта кашни работница Тӑван ҫӗршыва ытларах продукци парассишӗн ырми-канми ӗҫлет.

Татьяна Пирогова ертсе пыракан тӗвӗчихӗсен бригади ӗҫре уйрӑмах паха тӗслӗх кӑтартать. Бригада пӗлтӗрхи производство планне чылай ирттерсе пурнӑҫларӗ. Т. Пирогова хӑй вара пӗччен икӗ ҫул нормине тултарчӗ, пӗтӗм продукциран 99,84 процентне пӗрремӗш сортпа туса кӑларчӗ. Продукци пахалӑхне лайӑхлатас тӗлӗшпе паха тӗслӗх кӑтартнӑшӑн СССР Ҫӑмӑл промышленность министерстви унӑн бригадине чи лайӑх продукци туса кӑларакан бригада ятне пачӗ. Анфиса Николаева, Татьяна Куликова юлташсем ертсе пыракан бригадӑсем ҫак кунсенче сменӑри задание ялан ирттерсе тултараҫҫӗ. Т. Куликова юлташ иртнӗ уйӑхри задание 142 процент тултарнӑ, чӗртавар нумай перекетленӗ, пӗтӗм продукциран 99,5 процентне пӗрремӗш сорт туса кӑларнӑ.

Уяв умӗнхи производствӑллӑ ҫӗкленӳ чылай работницӑсен ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме май пачӗ. Т. Алексеева, Н. Амелькина, К. Егорова, Т. Ильина, А. Чиркова, тата ытти ҫӗршер работницӑсем халӗ пиххӗнхинчен тухӑҫлӑрах ӗҫлеҫҫӗ.

Чӗререн тав тӑватӑп

Эпӗ виҫӗ ача амӑшӗ. Чи кӗҫӗнни—Валентина, пӗр ҫулта. Нумаях пулмасть Валентина чирлерӗ. Малтан, килтех иртсе каять пулӗ тесе, эпӗ больницӑна кайма васкамарӑм. Анчах та чир иртмерӗ, ачан сылтӑм хӑлхи шыҫса кайрӗ.

Эпӗ ачана Элӗкри больницӑна илсе кайрӑм. Унта ман ачана сыватма хучӗҫ. Унпа пӗрле эпӗ те юлтӑм. Больницӑна хунӑ хыҫҫӑнах ман ачана кирлӗ пек сыватма тытӑнчӗҫ.

Кунта ӗҫлекен И. Борисова врач чирлӗ ҫынсене питӗ ӑшӑ кӑмӑлпа пӑхать. Вӑл чирлӗ ҫынсене яланах сыватса ӑшӑ кӑмӑлпа ӑсатса ярать. Ҫавӑнпа эпӗ те хамӑн ачана сыватасса шанса тӑтӑм, врача ӗненсе пурӑнтӑм.

Врач тӑрӑшнипе виҫҫӗмӗш кунхине Валентина сывалма пуҫларӗ. Шыҫса кайнӑ касни хыҫҫӑн лайӑх сывалса пычӗ. Сакӑрмӗш кунхине Валентина сывалса ҫитрӗ.

Эпӗ Пакинна Владимировна Борисована чӗререн тав тӑватӑп, хамӑн ачана Тӑван ҫӗршыва хӗрӳ юратакан ҫын пулма пӑхса ӳстерме тӑрӑшатӑп.

Ача амӑшӗ **Мария ФИЛИМОНОВА**.

Колхоз утарӗнчен—пысӑк тупӑш

КАНАШ. Янмакассинчи Доронин ячӗпе тӑракан колхоз хурт-хӑмӑртан ҫулсеренех пысӑк тупӑш илет. Утарсен заведующийӗ П. Григорьев тӑрӑшса ӗҫленине пула, иртнӗ ҫулта колхоз хурт-хӑмӑртан пурӗ 180 пин тенкӗ таса тупӑш илнӗ. Кунсӑр пуҫне хурт-хӑмӑрсене хӗл каҫарма кашни вӗллене 16-шар килограмм пыл хӑварнӑ.

Утарсенче колхозри хурт-хӑмӑр ӑстисем нумай ҫул хушши ӗҫлеҫҫӗ. 72 ҫулхи колхозник П. Романов 20 ҫул хушши ытла иккӗмӗш утарта ӗҫлет. Ҫак вӑхӑтра вӑл вуншар хурт-хӑмӑр ӑсти вӗрентсе хатӗрленӗ. Ҫавӑн пекех Г. Зайцевпа А. Архипов колхозниксем те утарта нумайранпа ӗҫлеҫҫӗ. И. Романовпа Г. Зайцев колхозниксем иртнӗ ҫулта, ӗҫшӗн хушса тӳлемелли йӗркепе, 35 пӑт пыл тата 6 вӗлле хурт-хӑмӑр илчӗҫ.

Колхоз иртнӗ ҫулта колхозниксене ӗҫкунӗсем тӑрӑх пыл валеҫсе пачӗ. Колхозра тӳррӗн тӑрӑшса ӗҫлекен колхозниксем: П. Сергеев—3 пӑт, И. Романов—8 пӑт, О. Васильев—6 пӑт, М. Захаров—3 пӑт пыл илчӗҫ.

Районти библиотекӑра

ШИПЛЕЙ. Районти библиотекӑна кулленех вуншар ҫын пырать. 1951 ҫулта вӗсем кунтан 35.823 кӗнеке илсе вуланӑ.

Килҫурт хӗрарӑмӗ Г. Одинцова ҫулталӑк хушшинче 49 кӗнеке илсе вуланӑ, вӑл шутра Фединӑн «Первые радости», Каверинӑн «Два капитана», Шпановӑн «Поджигатели» произведенийӗсем.

«Знамя коммунизма» колхоз членӗ А. Соколов иртнӗ ҫулта 52 кӗнеке вуласа тухнӑ. Вӑл ялхуҫалӑх литературине ҫеҫ мар, художествӑллӑ произведенисемпе те интересленет. Вӑл Мальцевӑн «От всего сердца», Фединӑн «Необыкновенное лето», К. Турханӑн «Пӑмраллӑ ял» кӗнекисене вуланӑ.

1951 ҫул пуҫламӑшӗнче библиотекӑран кӗнекесем илсе вулакансен хисепӗ 807 ҫын пулнӑ пулсан, халӗ вӗсем 967 ҫынна ҫитнӗ.

Кӗнеке фончӗ те ӳссе пырать. Ҫулталӑк хушшинче ҫӗнӗрен 1.608 кӗнеке тунӑ. Халӗ библиотекӑра 10.453 кӗнеке.

Ответлӑ редактор заместителӗ **И. П. ПАВЛОВ-ПИНЕР.**

ЧӐВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРӖНЧЕ
Паян, мартӑн 7-мӗшӗнче, чӑвашла спектакль
„Ялта“
Ыран, мартӑн 8-мӗшӗнче, вырӑсла спектакль
„ЖЕНИТЬБА“
Спектакльсем каҫхине 20 сехетре пуҫланаҫҫӗ.

„Родина“ кинотеатрта
Паян, мартӑн 7-мӗшӗнче, Китайра кӑларнӑ ҫӗнӗ фильм
„Сын степей“
Ыран, мартӑн 8-мӗшӗнче,
„ЧЛЕН ПРАВИТЕЛЬСТВА“
Сеанссем 12, 14, 16, 18, 20 тата 22 сехетре пуҫланаҫҫӗ.

ҪИТЕС КУНСЕНЧЕ
Шупашкарти тата республикӑри кинотеатрсенче
ҫӗнӗ илемлӗ фильм
„ПРЖЕВАЛЬСКИЙ“
КӐТАРТМА ТЫТӐНАҪҪӖ.
Сценарийӗ—А. Спешневпа РСФСР искусствисен тава тивӗҫлӗ деятелӗпе Сталинла преми лауреачӗн В. Швейцерӑн.
Постановщикӗ—Сергей Юткевич.
Композиторӗ—Ю. Свиридов.
Пржевальский ролӗнче — РСФСР тава тивӗҫлӗ артисчӗ С. Папов.
Ленин орденлӗ «Мосфильм» киностудийӗнче туса хатӗрленӗ.
Главкинопрокатӑн Чӑваш республикинчи кантурӗ кӑтартма тытӑнать.
1952 ҫ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлӑ редактор—0-67, ответлӑ редактор заместителӗ—3-99, ответлӑ секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—5-74, парти пурнӑҫ пайӗ—4-17, ялхуҫалӑх пайӗ—3-97, пропаганда пайӗ—8-61, культура пайӗ—8-61, совет строительстви пайӗ—8-61, ҫырусен пайӗ—7-32, издательство кантурӗ—0-23.

НТ 00639 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.